1938 ИЙУЉ 6
ЙУНКУН
154 (4967) №

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ЧӐВАШ КОММУНӖ

21-мӗш ҫул тухать

ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗпе Тӗпӗҫтӑвкомӑн хаҫачӗ

Пӗр №-рӗ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСӖ: Город Чебоксары, ул. Нелидовского, 5, Дом Печати
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторӑн 0—57
Ред. заместителӗн 0—55
Редакци секретарӗн 4—40
Дежурнӑйӗн 6—23

Вӑйлӑ тырпула лайӑх пуҫтарса кӗртессишӗн социалисӑмлӑ ӑмӑртӑва анлӑн сарар

Нумайах пулмасть Тутар республик делегацийӗ Чӑваш республикӗнче 3 республикӑ хушшинчи социалисӑмлӑ ӑмӑрту догӑварне пурнӑҫа кӗртесси мӗнле пынине килсе тӗрӗслесе карӗ. Делегаци республикӑра тырӑ лайӑх ҫитӗннине кӑтартать. Ҫакӑ вӑл колхозсенчи социалисӑмлӑ ӗҫ хӑйӗн ҫимӗҫне пани ҫинчен, колхозниксем тӑрӑшса ӗҫлени вӑйлӑ тырпул илме май пани ҫинчен калать. Халӗ ӗнтӗ ҫак тырпула пуҫтарса кӗртес ӗҫсем патнелле таччӑнах пырса тӑтӑмӑр. Пирӗн умра тӑракан тӗп задач вӑл—пӗтӗм колхозниксене социалисӑмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнтарса кӑҫалхи вӑйлӑ тырпула нихӑҫанхинчен те лайӑх пуҫтарса кӗртмеле тӑвасси пулать.

Тутар республик делегацийӗ пирӗн ӗҫсене тӗрӗслесе тухни ҫакна кӑтартрӗ: социалисӑмлӑ ӑмӑрту республикӑра кирлӗ вырӑна йышӑнайман ха. Социалисӑмлӑ ӑмӑрту догӑварӗн тӗп шухӑшӗсем чылай ҫӗрте колхозниксем патне ҫитеймен.

Чӑваш, Тутар, Мордва республикӗсем хушшинче тунӑ социалисӑмлӑ ӑмӑрту догӑварӗ тӑрӑх, калчасене пурне те икӗ хутран кайа мар ҫумкурӑкӗсенчен тасатмала, пӗтӗм тырпула ҫумкурӑкӗсенчен таса тытса тӑмала. Ҫак пункта чылай ҫӗрте пурнӑҫа кӗртеймен. Тутаркас, Йӗпреҫ т. ыт. хӑшпӗр районсенчи чылай колхоз уй-хирӗсенче пӑрҫа-йасмӑк, йӗтӗн-кантӑр, сӗлӗ, ҫурхи тулӑ анисене ҫумкурӑкӗ пусса илнӗ. Тутар республик делегацийӗ шутласа пӑхнӑ тӑрӑх, Йӗпреҫ районӗнчи „Мӑрат“ колхозӗнче тулӑ акнӑ вырӑнта пӗр тӑваткал метр ҫинче тулӑ 260 тӗп, ҫумкурӑкӗ 215 тӗп. Ҫав колхозрах рекордлӑ пӑрҫа участкинче—пӑрҫа 50 тӗп, ҫумкурӑкӗ—200 тӗп. Райҫӗрӗҫ пайӗн агрономӗ Баранӑв тырӑ ӳснӗ вӑхӑтра пӗре те колхоз хирӗсене тухса курман та. Канаш районӗнчи „Хӗрлӗ Ҫӑлтӑр“ колхозра пӑрҫа ани пӗтӗмпех ҫумкурӑкӗ айне пулнӑ. Ана халех ҫумласа тухмасан, пӑрҫа пӗтӗмпех пӗтсе ларма пултарать.

Социалисӑмлӑ ӑмӑрту догӑварӗ тӑрӑх, кашни колхозрах сушилкӑсем, кашни бригадӑрах витнӗ итемсем тумала. Тутар республик делегацийӗ пирӗн республикӑра 43 колхозра пулнӑ. Ҫак колхозсенчен виҫҫӗшӗнче анчах витнӗ итемсем пур. Ытти колхозсенче витнӗ итемсем тума та, сушилкӑсем тума та тытӑнман. Итемсем хатӗр мар.

Йалхуҫалӑх машинӗсене тыр патне тухма йусаса хатӗрлесси начар тӑрать. Вӑрнар районӗнче тыр вырмали 97 машинран 26-шне ҫеҫ йусанӑ. Зеленовка колхозӗ малта тӑракан колхоз. Унта та тыр вырмали машинсене йусаман. Трак МТС-че 6 комбайн. Вӗсенчен пӗрне йусанӑ тесе шутлаҫҫӗ. Анчах ҫав йусаннӑ шутланакан комбайн барабанӗ ӑшӗнче чанкасем йӑва ҫавӑрнӑ! Молотилкӑсем валсӑр ларҫҫӗ. Ҫичӗ автомашинӑран йурӑхли 3 анчах. Пин гектар патне ҫӗртме тумала, ҫав вӑхӑтрах трактӑрсем ахаљ ларҫҫӗ. МТС директӑрӗ Угољков йулташ МТС паркне тырпул пухса кӗртме хатӗрлес вырӑнне, ӗҫрен пайан-ыран пӑрахса кайас шухӑшпа пурӑнать. Пирӗн шутпа, Трак МТС мӗн чухлӗ Угољковран хӑвӑртрах хӑтӑлать, ҫавӑн чухлӗ МТС ӗҫӗсем хӑвӑртрах лайӑхланасси килет.

Чылай МТС-сенче трактӑриссемпе комбайнерсем ваљљи ӗҫ тухӑҫне хӑпартма хавхалантаракан условисем туса паман. Трак, Шупашкар МТС-чен сайра-хутра мар трактӑриссем ӗҫе пӑрахса кайаҫҫӗ. Ҫакӑн пек йӗркесӗрлӗхе пӗтерес тесен, МТС рабочисем ваљљи тивӗҫле ӗҫ условисем туса памала.

Чылай ҫитменлӗхсене палӑртса хӑварчӗ Тутар республик делегацийӗ. Халӗ ӗнтӗ, уй ӗҫне тухас вӑхӑт умне таччӑн ҫитсе тӑтӑмӑр. Ҫавӑнпа та уйрӑмах виҫӗ республикӑ хушшинчи социалисӑмлӑ ӑмӑртӑвӑн малтанхи тапхӑрӗнче пулнӑ ҫитменлӗхсене хисепе тӗплӗн илни кирлӗ. Тутар республик делегацийӗ кӑтартса хӑварнӑ ҫитменлӗхсем пирӗн ӗҫре малашне текех пулмалла мар.

Йалхуҫалӑх машинӗсене йусас тӗлӗшпе васкасах кӑмака вӑл, тата, ҫаплах хӑшпӗр вырӑнсенче машинсемпе ӗҫлессине хирӗҫле шухӑшсем тӑрӑ тымар илсе тӑни ҫинчен те калать. Машинпа ӗҫлессине хирӗҫле шухӑшсене хайаррӑн пӗтерсе пымала. Кӑҫал тырӑ иртнӗ ҫулхинчен те вӑйлӑ пулать. Апла пулсан—ӗҫсем те нумайланаҫҫӗ. Акӑ мӗншӗн ӗнтӗ пирӗн пур йалхуҫалӑх машинӗсемпе те туллин усӑ курмала, машинсене кунӗн-ҫӗрӗн ӗҫлеттермеле тӑвас пулать.

Ийулӗн 4-мӗшӗнче епӗр ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗ „1938 ҫулта тырпула пухса кӗртесси ҫинчен ССРС Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ йышӑннӑ решенине пурнӑҫа кӗртесси ҫинчен“ йышӑннӑ постановленине пичетлесе кӑлартӑмӑр. Партипе совет организацисен ҫак постановлении тӑрӑх халех пӗр-пӗринпе ӑмӑртакан пӗтӗм колхозсемпе районсем хушшинче 1938 ҫулти тырпула пухса кӗртме хатӗррине, социалисӑмлӑ ӑмӑрту догӑварне пурнӑҫланине тӗрӗслесе тухмала, тӑвас пулать. Ҫак тӗрӗслӳ социалисӑмлӑ ӑмӑртӑва пӗтӗм колхозниксемпе колхозницӑсене хутшӑнтармали май пулмала.

Хаљхи вӑхӑтра пӗтӗм ӗҫ парти, совет тата ҫӗрӗҫ органӗсен, машинӑ трактӑрлӑ станцисен руководителӗсем ҫинче тӑрать. Тырпула ӑнаҫлӑн пухса кӗресси вӗсенчен, вӗсем ӗҫе тата ҫынсене организацилеме пӗлнинчен, колхозниксен ӳснӗ политикӑлӑ тата производствӑлӑ активлӑхне пуҫарса пыма пӗлнинчен, стахановла йухӑма ӑннипех массӑлӑ, ӑннипех халӑх йухӑмӗ туса йама пӗлнинчен килет.

ССР Сойузӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ кӑтартса панисене татах та тепӗр хут астутарас пулать. Унта каланӑ: „Вӑйлӑ тырпула ӑнаҫлӑ пуҫтарса кӗртес задач вӑл—колхоз стройӗн организацилӗхне ҫӗнӗ, ҫӳлӗрех сыпӑка хӑпартма, социалисӑмлӑ ӑмӑртӑва татах ӳстерсе йама хушать. Совет органӗсен, чӑн малтан—ҫӗрӗҫ органӗсен йалхуҫалӑхӗнчи стахановла йухӑма йертсе, пуҫарса пымала.

Массӑсем хушшинче организацилӗ ӗҫсене кулленех туса пырас вырӑнне уйрӑм рекордсем хыҫҫӑн ҫеҫ хӑвалама хӑтланакансене хирӗҫ татӑклӑн кӗрешмелле... малта пырса кӗрешекенсен опытне колхозниксемпе колхозницӑсен, совхозсенчи рабочисемпе работницӑсен пӗтӗм массине памала пултӑр“.

Пайан епӗр „Чӑваш Коммунӗнче“ Краснодар крайӗнчи Шчербинӑвски районӗнчи колхозниксен ҫырӑвне пичетлесе кӑларатпӑр. Вӗсем ҫуркуннехи пекех халӗ те ӑмӑртӑва пуҫаракансем пулса тӑчӗҫ. Ун чухне вӗсем пирӗн аслӑ ҫӗршыври колхозниксене ҫураки ӗҫне кӑтартулӑн иртерме, вӑйлӑ тырпул ӳстерме чӗнчӗҫ. Хаљ вӗсем пур колхозниксене те вӑйлӑ тырпула кӑтартулӑн пуҫтарса кӗме социалисӑмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнма чӗнеҫҫӗ.

Сойузри пӗтӗм колхозниксене чӗнсе каланӑ ҫырура шчербинӑвцӑсем ҫапла ҫыраҫҫӗ:

„Колхозниксемпе колхозницӑ йулташсем!

Лайӑх пуҫласа йанӑ йалхуҫалӑх ҫулне пысӑк ӳсӗмсемпе вӗҫлеме пӗтӗм вӑйа мобилизацилӗр!

Йулташсем, ҫулсерен 7—8 мӗлйард пӑт тырӑ илмелле тенӗ лозунга 1938 ҫулта ӑнаҫулӑн пурнӑҫа кӗртни ҫинчен аслӑ Сталин йулташа рапӑртлама тивӗҫ илессишӗн социалисӑмла ӑмӑртӑва хутшӑнӑр“.

Шчербинӑвцӑсем чӗнсе калани пирӗн республикӑри пӗтӗм колхозниксене кӑҫалхи вӑйлӑ тырпула нихӑш ҫулхинчен те лайӑхрах пухса кӗме мобилизацилемеле. Шчербинӑвцӑсем чӗнсе калани чӑннипех те пӗтӗм колхозниксен массине социалисӑмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнтармала, ҫакӑн тӑрӗх тыр пула кӗске срукра пӗр тӑкаксӑр пухса кӗртме хавхалантармала.

Сталин йултӑш: „Тырпулсене пуҫтӑрса кӗртесси—сезонлӑ ӗҫ, тӑхтаса тӑнине йуратмасть вӑл. Вӑхӑтра пуҫтаратӑн—илетӗн, ӗҫре кайа йулатӑн—ҫухататӑн“, тесе кӑтартса панине асра тытса, республикӑри пӗтӗм колхозниксемпе колхозницӑсем, ҫӗрӗҫ работникӗсем шчербинӑвцӑсене ҫапла ответлӗҫ:

— Епӗр илмели тырра илме тивӗҫлӗ. Епӗр ӑна илетпӗрех! Вӑйлӑ тырпула кӑтартулӑн пуҫтарса кӗрӗпӗр, виҫӗ республикӑ хушшинче пыракан социалисӑмлӑ ӑмӑртура малти вырӑн тухӑпӑр!

Колхоз уй-хирӗсенче социалисӑмлӑ ӑмӑртӑва анлӑн сарса йарар

(Краснодар крайӗнчи Шчербинӑвски районри колхозниксемпе колхозницӑсем, комбайнерсем, трактӑриссем, МТС работникӗсемпе специалиссем пур колхозниксемпе колхозницӑсене, совхозсенчи рабочисене, комбайнерсене, шоферсене, трактӑриссене, агрономсене, МТС тата ҫӗрӗҫ органӗсен работникӗсене чӗнсе каланӑ ҫырусем).

Пилӗк уйӑх кайарах епӗр, Краснодар крайӗнчи Шчербинӑвски районри колхозниксем, хамӑр ҫине ҫапла обйазательствӑ илнӗччӗ: — иртнӗ ҫулта гектартан 13,7-шар центнӗр илнӗ вырӑнне кӑҫал 1938 ҫулта пӗтӗм районӗпе тӗштырӑсен вӑтам тухӑҫне 21 центнӗре ҫитермеле. Ҫав обйазательствӑна епӗр пурнӑҫа кӗртетпӗр ҫеҫ те мар, ытлашшипех тултаратпӑр. Уйсем пирӗн пурте тикӗс, таса. Пӗтӗмпе илсе танлаштарса пӑхсан, вӑйлӑ тырпул маҫтӑрӗсен РСФСР Верховнӑй Совет депутачӗн В. Д. Костенко, В. Е. Кимлач бригадин, Ф. Г. Мищенко тата Анастасийа Бурба бригадисен участкисем уйрӑмӑнах лайӑх ӳсеҫҫӗ. Вӗсен кӗрхи тулӑ акнӑ участкӑсем ҫинчен кашни гектартан 40-шер центнӗр ытларах тырӑ тухасси курӑнать.

Пирӗн кӑҫал пит вӑйлӑ пулнӑ тырпула пуҫтрса кӗртмеле пулать. Ун пек вӑйлӑ тырпула епӗр те, пирӗн аттесем те пуҫтарса курман. Ҫакӑ ӗнтӗ стахановла ӗҫлес йухӑм анлӑн сарӑлнине, колхозниксемпе колхозницӑсем пурте колхоз ӗҫӗнче тӳрӗ ӗҫленине уҫҫӑн кӑтартаканни пулса тӑрать. Ҫавӑн пек вӑйлӑ тырпулсене пуҫтарса кӗртес ӗҫе тӗплӗн, пур вак-тӗвек ӗҫсене шута илсе организацилеме, ӗҫ вӑйӗсемпе ӗҫхатӗрӗсене тӗрӗс валеҫсе тухма, тӗрӗс планпа ӗҫлеме хушать.

Пирӗн комбайнерсем бригадирсемпе пӗрле ӗҫлемели участкӑсене (загонсене) вӑхӑтра палӑртса тухрӗҫ. Хӑш вырӑнта ҫулса тасатмалине, кашни уйа миҫе загона валеҫсе тухмалине бригадирсем тӗрӗс пӗлсе тӑраҫҫӗ. Загонсем пысӑкӗшӗ агрегата пӗр кун ӗҫлеме панӑ задани пысӑкӗшӗ пулаҫҫӗ.

Ӗҫе ҫавӑн пек организациленипе епӗр тӗштырӑсене пурне те 15 ӗҫ кунӗ хушшинче пуҫтарса кӗртме пултаратпӑр тесе шутлатпӑр тата пӗтӗм ҫӗршыв умӗнче хамӑр ҫине ҫавӑн пек обйазательствӑ илетпӗр: 22.700 гектартан кайа мар—пӗтӗм лаптӑкран 86 процентне—комбайнсемпе пуҫтарса кӗртетпӗр.

Тырӑ тӑратас тӗлӗшпе государствӑ умӗнчи обйазательствӑсене тата МТС ӗҫленӗшӗн натурплатӑ тӑратассине пӗтӗмпех, кашни колхозӑн пӗрремӗш запӑвӗчӗ пек шутласа, августӑн 1-мӗшне тултаратпӑр.

Пӗтӗм тырра икӗ хут, вӑрлӑхлӑх тырра виҫӗ хут 25—30 кун хушшинче тасатса ҫитерсе августӑн 15 мӗшӗччен итемсем ҫинчен турттарса тухатпӑр.

Тырпулсене пуҫтарса кӗртмели иртнӗ ҫулсенчи плансенче пирӗн пӗр палла ҫитменлӗх пулнӑ. Плансем ҫинче камӑн мӗнле ӗҫе тумалине кӑтартман пулнӑ. Вӑрлӑх тасатас ӗҫе, пучахсене пуҫтарса пыма, кӗлтесене капана хывма тата ытти ӗҫсене бригадирсем ӗҫ вӑхӑтӗнче ҫынсене уйӑрса тӑратнӑ.

Кӑҫал епӗр урӑхла тӑватпӑр. План тунӑ чухнех епӗр ҫынсене валеҫсе тухатпӑр. „Красноармеец“ ертел колхозникӗсем пуҫарнипе, тырпулсене пуҫтарса кӗрес ӗҫре ӗҫлекен звеносен списокӗсене пурне те малтан бригадӑри пухусенче тунӑ, ун хыҫҫӑн колхоз правленийӗн ларӑвӗнче пӑхса тухнӑ, йулашкинчен вара колхозниксен пухӑвӗнче ҫирӗплетнӗ.

Тырпулсене пуҫтарса кӗрес ӗҫе тухиччен йулнӑ вӑхӑтра епӗр туса ҫитермен ӗҫсене пурне те туса ҫитерессишӗн тата комбайн агрегачӗсене культурӑпа йӑла тӗлӗшӗнчен пӑхассине кӑтартулӑ организацилеме хатӗрленетпӗр.

Тырпулсене пуҫтарса кӗртес ӗҫе—хӗрӳлӗ ӗҫе хатӗрленсе пырса, епӗр Совет Сойузӗнчи пур колхозниксемпе колхозницӑсене ҫӗнӗрӗн чӗнсе калатпӑр:

Сталинла тырпула стахановла пуҫтарса кӗрессине организацилӗр!

Колхоз уй-хирӗнче социалисӑмлӑ ӑмӑртӑва анлӑн сарса йарӑр!

Пирӗн аслӑ ҫулпуҫ, пирӗн тӑван йулташ Сталин: „Тырпулсене пуҫтарса кӗртесси—сезонлӑ ӗҫ, тӑхтаса тӑнине йуратмасть вӑл. Вӑхӑтра пуҫтаратӑн—илетӗн, ӗҫре кайа йулатӑн—ҫухататӑн“, тесе кӑтартса панине пӗр минутлӑха та ан манӑр. Пирӗн илмелех. Епӗр илмелине илетпӗрех!

Колхозниксемпе колхозницӑ йулташсем! Тырпулсене пуҫтарса кӗртес ӗҫ уйрӑмӑнах ӗҫ дисциплинине ҫирӗплетме ыйтать. Ӗҫ патне кайма туртӑнса тӑни, ӗҫе тухмасӑр тӑни кӑш та, пӗртте ан пултӑр! Лайӑх пуҫласа йанӑ йалхуҫалӑх ҫулне пысӑк ӳсӗмсемпе вӗҫлеме пӗтӗм вӑйа мобилизацилӗр.

Комбайнерсемпе комбайнеркӑсем, трактӑриссемпе трактӑрискӑ йулташсем! Тырпулсене пуҫтарса кӗртес ӗҫе кӗске срукра иртерессишӗн, комбайнӑн талӑкри ӗҫ тухӑҫлӑхне ҫӳлерех ӳстерессишӗн, уй-хирсене таса пуҫтарса кӗртессишӗн ӑмӑртӑва анлӑн сарса йарӑр! Машинсене тирпейлӗ тыткалӑр! Ӗҫ кунӗнчи кашни минутӑна ахаљ ан иртерӗр. Машинсене техникӑ йӗнчен вӑхӑтра пӑхса тӑрса тата сӗрсе тӑрса авари пулассинчен сыхланӑр.

Шофӗр йулташсем! Вӑйлӑ тырпула вӑхӑтра уй-хиртен турттарса тухасси сирӗнтен килет. Тырпулсене пуҫтарса кӗртес ӗҫре автомашинӑсемпе стахановла усӑ курӑр! Тырпул тӑкакӗпе кӗрешӗр, автопарксене сыхлӑр!

Агроном йулташсем! Колхозсене тырпулсене пухса кӗмели плансене вӑхӑтра тума, ӗҫ вӑйӗсемпе ӗҫхатӗрсене тӗрӗс валеҫме пулӑшӑр. Тырпул тӑкакне хирӗҫ анлӑн кӗрешессине организацилӗр!

МТС тата ҫӗрӗҫ органӗсенче ӗҫлекен йулташсем! Йалхуҫалӑхӗнче стахановла ӗҫлес йухӑма йертсе пырассине вӑйлатӑр, колхоз ӗҫне организацилессине ҫӳлерех сыпӑка ҫӗклентерӗр, пирӗн тӑван колхоз стройне ҫирӗплетӗр.

Социалисӑмлӑ уй-хир ударникӗсемпе стахановецсем! Пӗр сехетлӗх те, кирӗк мӗнле ӗҫ участкинче те сыхӑлӑха ан ҫухатӑр. Йутҫӗршыв разведкисене сутӑннӑ ирсӗр троцкиссемпе бухаринцӑсене тата буржуалӑ-националиссене ним шеллемесӗр тӑрӑ шыв ҫине кӑларса пырӑр. Вӗсем вӑйлӑ тырпула пуҫтарса кӗртес ӗҫе те чӑрмантарма пӑхӗҫ.

Тырпулсемпе машинсене шанчӑклӑн сыхласа тӑмала тӑвӑр, пуҫтарса илнӗ тырра кирлӗ пек вӑхӑтра тата тӗрӗс учота илсе пынине асӑрхаса пырӑр!

Йулташсем, ҫулсерен 7—8 мӗлйард пӑт тырӑ илмеле тенӗ лозунга 1938 ҫулта ӑнаҫулӑн пурнӑҫа кӗртни ҫинчен аслӑ Сталин йулташа рапӑртлама тивӗҫ илессишӗн социалисӑмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнӑр.

Государствӑ умӗнчи обйазательствӑсене пӗтӗмпех вӑхӑтра тултарса пырассишӗн, йалхуҫалӑх продукцине нумайлатассишӗн, колхозсен пуйанлӑхне татах вӑйлатассишӗн, колхозниксене пуйанрах та культурӑлӑрах пурӑнмала тӑвассишӗн, пирӗн йуратнӑ тӑван ҫӗршывӑн хавачӗпе чаплӑхне ҫӗнӗрен татах вӑйлатассишӗн кӗрешӗр!

Краснодар крайӗнчи Шчербинӑвски районӗнчи колхозниксемпе колхозницӑсем, комбайнерсем, трактӑриссем, МТС работникӗсемпе специалиссем.
(Ҫыру ҫине 2.512 ҫын алӑ пуснӑ).

Займ ҫырӑнасси пысӑк ҫӗкленӳпе пулса пырать

Совет Сойузӗнчи ӗҫҫыннисем Виҫҫӗмӗш Пилӗкҫуллӑх Займне пысӑк ҫӗкленӳпе хавхаланса ҫырӑнса илеҫҫӗ.

Пур ҫӗрте те займ ҫырӑнса илесси иртнӗ ҫулхинчен пысӑк. Сӑмахран, Харьковра ийулӗн 3-мӗшне кӑҫхине 6 сехет тӗлне займ ҫырӑнса илни пӗтӗм сумми иртнӗ ҫулхинчен 1.107 пин тенкӗ ытларах шутланнӑ.

Украинӑ тӑрӑх ийулӗн 4-мӗшне 695.185 пин тенкӗлӗх ҫырӑнса илнӗ (иртнӗ ҫулта ҫак вӑхӑт тӗлне займ 549.033 пин тенкӗлӗх вырнаҫтарнӑ).

Белоруҫҫи тӑрӑх ийулӗн 4 мӗшне займа 76.252 пин тенкӗлӗх ҫырӑннӑ (иртнӗ ҫулхи ҫав вӑхӑт тӗлне пулнинчен 15.751 пин тенкӗ ытларах).

(ТАСС).



И. В Сталин, В. М. Молӑтӑв тата А. И. Микойан.
Ф. А. Модаров художник ӳкерчӗкӗ („Рабочисемпе Хресченсен Хӗрлӗ Ҫарӗ тата Тинӗс-Ҫар Флочӗ XX ҫул тултарнӑ“ выставкӑра).
Сойузфото репродукцийӗ.

Пӗтӗм совет халӑхӗ хавасланса займ ҫырӑнать

ӐНАҪЛӐН САРӐЛАТЬ

УЛАТӐР. (Телефон тӑрӑх). Районри пур предприйатисемпе учрежденисенче те ҫӗнӗ займ ӑнаҫлӑн сарӑлать. Ийулӗн 4-мӗшне 12 сехет тӗлне хулари рабочисемпе служӑщчисем тата хула халӑхӗ хушшинче 1.202.280 тенкӗлӗх, районри предприйатисенчи рабочисемпе служӑщчисем хушшинче 103.150 тенкӗлӗх займ ҫырӑннӑ.

Районӗпе колхозниксем хушшинче 67.035 тенкӗлӗх, йединоличниксем хушшинче 5.960 тенкӗлӗх сарнӑ.

Йалсоветсенчен займ сарас ӗҫре Йамлосадпа Стемас йалсовечӗсем лайӑх ӗҫлеҫҫӗ.

Йамлосад йалсоветӗнче (председателӗ Фомин йулташ) 14.500 тенкӗлӗх, Стемас йалсоветӗнче (председателӗ Митӳнин йулташ) 17.545 тенкӗлӗх займ сарнӑ.

Ахматӑвӑри „Свободный труд“ колхозра Куликов колхозник 100 тенкӗлӗх займ ҫырӑнса укҫине ҫав вӑхӑтрах тӳленӗ.

Улатӑрти 5-мӗш номӗрлӗ шкулти учителницӑ Клавди Иванӑвнӑ Муравйова йулташ 300 тенкӗлӗх займ илме ҫырӑнса укҫине те ҫав вӑхӑтрах тӳлесе татнӑ.

Улатӑр хулинчи пенсионер Николай Степанӑвич Гаранин йулташ уйӑхне 150 тенкӗ пенси илет, вӑл 300 тенкӗлӗх займ ҫырӑннӑ. Вӑл займ илме ҫырӑннӑ чухне:

— Тӗреклентӗр, чечеклентӗр социалисӑмлӑ ҫӗршыв, епӗ пӗтӗм ӗҫҫыннисене ман пекех пысӑк хаваслӑхпа займ илме чӗнетӗп, тенӗ.

8-мӗш номӗрлӗ хӑма ҫуракан савӑтра т. ыт. предприйатисемпе учрежденисенче те рабочисемпе служӑщчисем ҫӗнӗ займа пӗр уйӑх ӗҫ укҫи чухлӗ ҫырӑнаҫҫӗ, нумайӗшӗ укҫине те халех тӳлесе татаҫҫӗ.

Ийулӗн 4-мӗшне кӑнтӑрла иртсен 4 сехет тӗлне ҫӗнӗ займшӑн районӗпе 1.892 тенкӗ укҫа пухнӑ. Халӗ районра ҫӗнӗ займа ҫырӑнасси, займ ҫырӑннӑшӑн укҫине тӳлесси вӑйлансах пырать.

Телейлӗ пурнӑҫшӑн!

Шупашкарти промысла ертелӗсенче ӗҫлекенсем Виҫҫӗмӗш Пилӗкҫуллӑх (пӗрремӗш ҫулхи кӑларӑм) Займа илме тулли хаваслӑхпа ҫырӑнаҫҫӗ. Ийулӗн 2-мӗшӗнче кашни ертелте тенӗ пекех правителствӑ займ кӑларасси ҫинчен йышӑннӑ постановленийе ырласа митингсем, пухусем пулса иртрӗҫ.

„Красный мебельщик“ ертелте ӗҫлекенсем хӑйсен митингӗнче пурте пӗр сасӑпах займ илме ҫырӑнма пулчӗҫ.

—Социалисӑмлӑ тӑван ҫӗршывра пурӑнма ырӑ. Епӗр савӑнатпӑр, займ илме ҫырӑнса тӑван ҫӗршыва ҫирӗплетнӗ ҫӗре, телейлӗ пурнӑҫ тунӑ ҫӗре укҫа паратпӑр. Телейлӗ пурнӑҫа хамӑр аласемпе тӑватпӑр,—теҫҫӗ ӗҫлекенсем.

„Красный мебельщик“ ертелте ӗҫлекенсем малтанхи кунах 6.000 тенкӗ йахӑн ҫырӑннӑ. Чылайӗшӗ займ илме уйӑхри ӗҫукҫи чухлӗ ҫырӑнаҫҫӗ. Акӑ, Ваҫилйӗв йулташ—400 тенкӗлӗх, Прокопйӗв йулташ—350 тенкӗлӗх, Пономарйов йулташ—200 тенкӗлӗх ҫырӑнчӗҫ.

„Пекарь“, „Металлист“, „Кооператор“, „Волгарь“ ертелсенче ӗҫлекенсем те займа тулли хаваслӑхпа ҫырӑнаҫҫӗ. Акӑ, „Волгарь“ ертелте ӗҫлекенсенчен займа илме ҫырӑнманни пӗр ҫын та ҫук, пурте ҫырӑннӑ. „Пекарь“ ертелте те 103 ҫынтан 92 ҫын, пӗтӗмпе 14 пин тенкӗлӗх ҫырӑннӑ. Ку ертелте ӗҫлекен Йегорӑв йулташ уйӑхне 300 тенкӗ ӗҫлесе илет, ҫӗнӗ займа 400 тенкӗлӗх, Йемелйанӑв—250 тенкӗлӗх ҫырӑнчӗҫ (вӑл 200 тен. ӗҫлесе илет) т. ыт. те.

Займ илме ҫырӑнасси сарӑлсах пырать.

Хар. Лисин.

Пысӑк хастарлӑхпа ҫырӑнаҫҫӗ

Чӑваш республикӗнчи ӗҫхалӑхӗ Совет правителстви Виҫҫӗмӗш Пилӗкҫуллӑх (пӗррӗмӗш ҫулхи кӑларӑм) Займне кӑларма йышӑннине пысӑк хапӑл туса йышӑнчӗ. Иртнӗ ҫулта займ ҫинчен постановлени тухнӑ хыҫҫӑн малтанхи икӗ кун хушшинче республикӗпе 5.549.000 тенкӗлӗх ҫырӑннӑ пулсан, кӑҫал икӗ кун хушшинче (ийулӗн 4-мӗш) республикӗпе илсен 5.850.000 тенкӗлӗх ҫырӑннӑ. Займ илме ҫырӑнасси пысӑк активлӑхпа пулса пырать.

Шупашкар хулинче те ҫӗнӗ займа илме ҫырӑнасси лайӑх пырать. Кунта иртнӗ ҫулхи займа 10 кун хушшинче 1.521.000 тенкӗлӗх ҫырӑннӑ пулнӑ, Виҫҫӗмӗш Пилӗкҫуллӑх (пӗрремӗш ҫулхи кӑларӑм) Займа малтанхи 4 кун хушшинчех 1.825.000 тенкӗлӗх ҫырӑннӑ. Коммунисла аслӑ йалхуҫалӑх шкулӗнче, ремонтно-механически савӑтра, Шупашкар хули совечӗн комуналлӑ пайӗнче, Чӑваш вӑрман трестра тата ытти хӑшпӗр организацисенче те пур рабочисемпе служӑщчисем те займа пысӑк хаваслӑхпа ҫырӑннӑ.

Килхуҫи хӗрарӑмӗсем организацисенче ӗҫре тӑман ӗҫхалӑхӗ хушшинче займ сарас тӗлӗшпе займ уполномоченнӑйӗсем пулса ӗҫлеҫҫӗ. Антонӑвӑ (Заводскайа урамри уполномоченнӑй) 620 тенкӗлӗх ҫырӑнтарса 100 тенкӗ укҫа пырса хывнӑ. Пановӑ (Трудовайа урамӗ) 425 тенкӗлӗх, Салмина (Майаковский урамӗ) 440 тенкӗлӗх, Пегасӑвӑ (Урицкий урамӗ) 765 тенкӗлӗх, Ҫмирновӑпа Афанаҫйӗвӑ (Ленинград урамӗ) 860 тенкӗлӗх ҫырӑнтарнӑ тата ытти те. Ахлаткинӑ пенсионерсене ҫӗнӗ займ илме ҫырӑнтарас тӗлӗшпе лайӑх ӗҫлет. Вӑл икӗ кун хушшинче 2.250 тенкӗлӗх ҫырӑнтарнӑ.


Уйӑхри ӗҫукҫинчен ытла ҫырӑнтӑмӑр

Вӑрҫӑлӑ турӑсӑрсен Сойузӗн Чӑвашсоветӗнче ӗҫлекенсем правителствӑ займ кӑларма йышӑннине кӑмӑллӑн кӗтсе илчӗҫ. Ҫӗнӗ займа хавассӑн ҫырӑнаҫҫӗ. Пурӗ 2.225 тенкӗлӗх ҫырӑннӑ.

Кунта ӗҫлекен служӑщчисем уйӑхра илекен ӗҫукҫинчен ытла займ илме ҫырӑнчӗҫ.

Тимофейӗв.

Займ ҫинчен килнӗ ытти информацисем 2-мӗш страницӑра



УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Китай çарĕн бойецĕсем позицире.
(Союзфото) „Пресоклише".

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

(Июнĕн 30-мĕшпе июлĕн 4-мĕш хушшинчи вăрçă ĕçĕсене пăхса тухни)

Чженчжоу çине (Лунхай тата Бейпин — Ханькоу чукунçулĕсем пĕрлешнĕ çĕрти стратеги йенчен питех те кирлĕ пункт) наступлени туни ăнăçлă пулман хыççăн, йапонецсем вăрçă ĕçĕсен центрне Аньцин хули районне, Йанцзы шывĕ йатне куçарнă. Çакăнтан ĕнтĕ йапонецсем Ханькоу хули çине тапăнма пуçлаççĕ.

Аньцин районĕнче çапăçусем пыраççĕ. Йапонецсем Матан йатлă хула çине çĕр çинчен те тата сывлăшран та хыттăн персе тăраççĕ. Хула тулашĕнчи оборонă линиве çĕмĕрнĕ. Анчах, Матан хулине паттăрăн хÿтлекен Китай çарĕсем йапонецсен мĕн пур атакисене сирсе пыраççĕ. Китай çарĕсен йапонецсене хирĕç тăрас вăйне хуçас тесе, Йапонин çар карапĕсем Йанцзы шывĕ çинчи шыва пÿлсе хунине çĕмĕрме хăтланнă. Çакăнпа пĕрлех йапонецсем химилĕ снарйадсемпе те пеме пуçланă. Анчах çак ĕçсем йапонецсене хăйсем ĕмĕтленнĕ результатсем паман. Хальхи вăхăтра йапонецсем çар карапĕсемпе Пойанху кÿлли çине тухма хăтланаççĕ, вĕсем çав кÿлĕн кăнтăр çыранне десант антарса Наньчан хули çине (Цзйанси провинци) наступлени тума шутлаççĕ.

Йулашки кунсенче çапăçусем Матан хулинчен кăнтăр йенче Пынцзе районĕнче пулса пыраççĕ. Июлĕн 1-мĕшĕнче çĕрле Китай çарĕсем Матан хулинчен кăнтăр йенче Йапонин темиçе çĕр çынлă отрйадне çавăрса илнĕ те ăна йалтах пĕтерсе хунă. Китай авиацийĕпе артиллерийĕ Йапонин Йанцзы шывĕ çинче çар карапĕсем çине пĕрмайах переççĕ. Июнĕн 29-мĕшĕнче Китай авиацийĕ Йапонин пĕр карапне шыва путарнă тата Йапонин виçĕ истребителне персе антарнă.

Çурçĕр Китайра Хенань провинцинче вăрçакан Йапони çарĕсем унта çăмăр çав тери хыттăн çунипе аптраççĕ, Хуанхе йуханшывĕ пысăккăн сарăлса кайнипе вĕсене шыв илсе лартас хăрушлăх хăратса тăрать. Кайфын районĕнче вăрçакан Йапони çарĕсем, хăйсен тĕп çарĕсенчен татăлса кайассинчен шикленсе, Лунхай чукунçулĕ тăрăх хĕвелтухăçнелле кайала чакаççĕ. Китай çарĕсем Вейши хулине (Кайфынрен кăнтăр-хĕвеланăç йеннелле) тытса илнĕ.

Кăнтăр Китайра Йапони авиацийĕ Сватоу çине (Гуандун провинци) пĕрмайах бомбăсем пăрахать. Июлĕн 2-мĕшĕнче бомбăсем пăрахнипе 300 çын ытла вилнĕ тата темиçе çĕр çурта ишĕлтерсе антарнă.

(ТАСС).

Испанири фронтсенче

Левант фронтĕнче калама çук хаййар çапăçусем пыраççĕ. Пуебла де Вальверде районĕнче Пенйа Бланка патĕнчи позицире республиканецсем пăлхавçăсен атакисене хыттăн сирсе тăнă. Çав районтах пăлхавçăсем, авиаципе танксем пулăшса пынипе, Альдецела йышăннă. Фронтăн хĕвелтухăç йенчи районĕнчи пысăк çапăçусем Кастельонран хĕвеланăçнелле пыраççĕ.

Центрти фронтра Естремадура районĕнче пăлхавçăсем республиканецсене хĕссе пырасси чакнă. Йулашки вăхăтра тунă атакăсенче пăлхавçăсен пысăк çухатусем пулнă.

* * *

Фашиссен авиацийĕ республикă йалĕсем çине тапăнма халĕ те пăрахмасть-ха. Июлĕн 2-мĕшĕнче фашиссем Валенçирен 40 километр çурçĕрелле ларакан йал çине бомбăсем пăрахнă. Вилнисемпе аманнисем пур. Фашиссен 8 самольочĕ Кастельон провинцинчи Сегорбе йатлă йал çине бомбăсем пăрахма хăтланнă. Анчах республикă истребителĕсем вĕсене кайала хăваласа йанă.

•• Испанири пăлхавçăсем тытса илнĕ Кордова хулинче рабочисем забастовкă тунă. Вĕсем ĕçукçи ÿстерме ыйтнă. Пăлхавçăсен влаçĕсем забастовкă тăвакан рабочисене арĕслесе, вĕсене фронтри малти линисене йама хушнă.

•• Июнĕн 30-мĕшĕнче Америкăн тăватă моторлă „Летающая крепость" йатлă бомбардировщикĕ 3.700 километр вăрăмĕшне вĕçсе тухнă. Вĕçессе 4.000—4 800 метр çÿлĕшĕнче сехетре вăтамăн 327 километр вĕçнĕ. (ТАСС).

Германи çар командованийĕ Польшăпа интересленни

ПАРИЖ, июлĕн 2-мĕшĕ. „Евр" хаçат Америкăн паллă журналисĕ Никербокер çырнă статйана пичетлесе кăларнă. „Чехословаки тĕлĕшĕпе хăйĕн малтанхи планĕ пурнăçланманшăн намăсланнă Гитлĕр,—тесе çырать Никербокер, — Данцига Германипе пĕрлештерни Чехословаки ыйтăвĕ ăнаçманшăн тавăрни пулĕ, тесе шутлать пулмала. Дипломатире ĕçлекенсем ун пек хăтлану пулма пултарать, тесе шутлаççĕ. Гитлĕрĕн йут çĕршывсене туртса илес планĕнчен тухма пултаракан хирĕçÿсенчен Данцига çĕнтерсе илнипе, вăрçă пулас хăрушлăх пĕтĕмпех пĕтмесен те, хăрушлăх сахалтарах пулĕччĕ. Ку шухăша пуринчен малтан Польшă уйрăм тăни çирĕплетсе парать, Данциг Германипе пĕрлешни унăн интересĕсене уйрăмăнах туйăнтарĕччĕ. Польшăн йут çĕршыв ĕçĕсен министрĕ полковник Бек тытса пыракан икĕ шухăшлă политикă Францийе Польшăран çав терийех пăрса йарĕ, Франци вăра ун чух Данцига вăрçă тĕлĕшпе хÿтлес ĕçре Польшăна пулăшма парахăç тăвĕ".

Никербокер сăмахĕсем тăрăх, Германипе Польшă хушшинче ĕçсем йулашки вăхăтра ытларах хытса пыраççĕ тата çав вăхăтрах „Германин çар командованийĕ Польшăн çар вăйĕсем мĕнле тăнипе ытларах интересленет. Ку ĕçе Варшаваран илнĕ пĕлтерÿ лайăх кăтартса парать. Вăл пĕлтерÿре çакăн çинчен калана: Польшăн автомобил клубĕ организацилене авточупува хутшăнакансем, Германи штабĕн вунултă офицерĕ, срукчен вуннилĕк кун малтан Польшăна пынă, унта вĕсем автомобилсемпе чупмали маршрута икĕ ерне хушши тĕпчесе вĕреннĕ. Çав маршрут чикĕ хĕрĕнчи питĕ кирлĕ районсем урлă каçса кайнипе пула, Германи офицерĕсем хăйсен тĕпчевне авточупу вальли кирлинчен нумай ытларах сарса йанă".

Никербокер малала çапла пĕлтерет: Польшăн Парижри посолĕ Лукасевичпе Францин йутçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Бонне хушшинче Англи Польшăна 8 мĕлйун доллăр кивçен парасси çинчен калаçу пырать. Нимĕçсем,—тесе çырать Никербокер,—çав укçана Польшă Германирен уйралнăшăн тата вăл союзлă державăсен шутне кайала кĕнĕшĕн тÿлени пулать, тесе шутлаççĕ.

(ТАСС).

Германири хресченсем хушшинче фашисла режим çине тарăхасси ÿссе пырать

Германирен хресченсем фашисла влаç туса иртерекен ĕçсене хирĕç тăрасси вăйланса пыни çинчен калакан хыпарсем килеççĕ.

Халиччен хресченсем Берлинри пасарсене илсе пыракан хăйсен продуктисене тÿрех вакă сутăççене сутма пултарнă. Пĕр уйăх кайарах фашиссен влаçĕсем çĕнĕ распорйажени кăларнă. Вăл распорйажени тăрăх хресченсен хăйсен продуктисене обйазательнă йĕркепех шултăра сутăççене парас пулать, унтан тата сутакан продуктăсемшĕн çийĕнчех тÿлемеççĕ, икĕ ернере пĕр хут çеç тÿлеççĕ.

Хресченсем çак распорйаженине хирĕç саботаж туса, продуктăсен пĕчĕк пайне кăна пасара илсе тухаççĕ. Июнĕн 11-мĕшĕнче Берлинри тĕп вырăнта тăракан пасарта хресченсемпе полици хушшинче тытăçусем пулса иртнĕ. Çак кунсенче хресченсем фашиссен пасарсем тĕлĕшпе ĕçлекен „уполномоченнайне" хĕнесе тăкнă. Германин вăрттăн полицийĕ ултă хĕрарăм-хресчене арĕсленĕ, анчах тарăхса кайнă хресченсем хĕснипе вĕсене ирĕксĕрех ирĕке кăлармала пулнă.

Хресченсем пĕр кăмăллă пулса фашисла диктатурăна хирĕç тăни Германири ытти районсенче те пулнă. Ерланген районĕнчи пĕр йал хресченĕсем, хăйсене фашиссен хатĕрлев организацийĕ улталанă хыççăн, хулана сĕт илсе пыма пăчах чарăннă. „Хресченсен забастовкине" пусарса лартмашкăн йала жандармери отрйачĕ пынă.

(ТАСС).

Йапонири халăх пурнăçĕ начарланса пыни

Йапонире 30 тĕслĕ чи кирлĕ таварпа усă курма чаракан саккун кăларнă. Вăл 30 тĕслĕ тавар хушшинче: тир-сăран, чугун, тимĕр, цинк т. ыт. те. Июлĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа çĕрмамăкĕпе халăх нушисемшĕн усă курма чарса лартнă. Çĕрмамăкĕпе çар вальли кирлĕ йапаласем тăвакан промышлĕннăçра тата урăх çĕршывсене сутмали йапаласем тăвас ĕçре кăна усă курма йурать. Çапла туни ĕнтĕ кулен кирлĕ таварсем туса кăларнисене хытă чакарать тата ĕççĕр тăрса йулнисен шутне çĕнĕрен ÿстерсе йарать. Хальхи вăхăтра Йапонире ĕççĕр тăрса йулнисен шучĕ 800 пин çынран та иртет. Çÿлте асăннă çĕнĕ саккуна ĕçе кĕртнĕ хыççăн çакăн пек ĕççĕр тăрса йулнисен шучĕ пĕр мĕлйун та 300 пин çынна çити ÿсет. Ку цифрă çумне тата ĕççĕр тăрса йулнисен çемйисене хушса шутласан, Йапонире сахалтан та тăват-пилĕк мĕлйун çын выçă пурăнаççĕ. Йапонири ĕççĕр тăрса йулнă çынсене государствă йенчен нимĕнле пулăшу та памаççĕ.

(ТАСС).

Бойецсем вальли хăйсен йунĕсене параççĕ

Испани республикĕн çарĕнчи санитари службин тытăмĕнче 10 пин доброволец вăрçăра аманнă бойецсем вальли хăйсен йунĕсене параççĕ.

(ТАСС).

Республикă чиккисем тăрăх 1.500 километр велоçипедсемпе

(Велочупу командорĕпе И. Мйаçникăв йулташпа калаçнинчен)

Ĕнер, июлĕн 4-мĕшĕнче, ирхине 10 сехетре велочупу команди Шупашкара çитрĕ. Велочупу командорĕ И. Мйаçников йулташпа командăра пулнă Воронăв йулташ ĕнер „Чăваш Коммуне" редакцине кĕрсе, хăйсен велочупăвĕ çинчен каласа пачĕç.

— Ку велочупăва,—тет Мйаçников йулташ,—пуçламĕш тата вăтам шкулсенче ĕçлекенсен союзĕ пуçарнипе, РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйлама хатĕрленнĕ йатпа тата Чăваш республикĕ 18 çул тултарнă йатпа организацилене.

Командăра 6 учител-комсомолецĕпе, политрук Шербинин, Воронăв, Куçмин, Рйабчикăв тата Кудрйавцев йулташсем.

Июнĕн 16-мĕшĕнче кăнтăрла 2 сехетре Турханта старт пулчĕ. Унтан епĕр Шăмăршă районне çитрĕмĕр те, республикĕн чиккисем тăрăх çул тытрăмăр. Июнĕн 17-мĕшĕнче Йĕлчĕкре пултăмăр. Июнĕн 19-че каçхине Куславккана çитрĕмĕр. Тепĕр кунне ирхине Сентĕрвăррине тухса кайрăмăр. Сентĕрвăрри тĕлĕнче Атăл урлă каçса Колодйайĕвкă виттĕр Илйинкана пытăмăр. Июнĕн 23-мĕшĕнче Мăн Сĕнтĕрте пултăмăр. Малалахи маршрут—Йетĕрне—Пăрачкав—Çĕмĕрле—Улатăр—Турхан. Июнĕн 30-мĕшĕнче Турхана пырса кĕтĕмĕр: пысăк велочупу ăнăçлăн вĕçленчĕ.

15 кун хушшинче Чăваш республикĕн чиккисем тăрăх велоçипедсемпе чупса тухрăмăр, пĕтĕмпе 1.500 километр турăмăр. Машинăсем çĕмĕрĕлни пулмарĕ. Командăри çынсен сывлăхĕсем лайăх.

Пирĕн мĕнле те пулин рекорд тăвас тĕллев пулман. Епĕр çул çинче митингсем туса, халăха суйлав саккунĕпе паллаштартăмăр, Чăваш республикĕ 18 çул хушшинче Ленин—Сталин партийĕ тата Сталин йулташ йертсе пынипе тунă пысăк çитĕнÿсем çинчен каласа кăтартрăмăр. Ленинла-сталинла наци политикă çĕнтернипе пула, республикăри тĕрлĕрен нацисем пĕр çемйери пек туслăн килештерсе пурăнаççĕ. Епĕр чăвашсемпе—чăвашла, вырăссемпе—вырăсла, тутарсемпе—тутарла, мордвасемпе—мордвала калаçусем туса иртертĕмĕр.

Çул çинче, 15 кун хушшинче епĕр 26 çĕрте митингсемпе калаçусем турăмăр, 2 çĕрте вечĕр иртертĕмĕр, 6 номĕр стена хаçачĕ кăлартăмăр. Ĕççыннисем пире пур çĕрте те ăшă кăмăлпа йышăнса илчĕç.

Июнĕн 26-мĕшĕнче епĕр Йетĕрнере пултăмăр. Çак историлĕ чаплă кун хамăран сасăсене коммунистсемпе партире тăманнисен Сталинла блок кандидачĕсемшĕн—Малинин тата Ваганăв йулташсемшĕн патăмăр.

Финиш хыççăн кăшт кантăмăр та, июлĕн 3-мĕшĕнче ирхине 8 сехетре Турхантан Шупашкара килме тухрăмăр. 165 километр хушăна йĕркелĕ чупса тухрăмăр.

Икĕ ерне хушшинче епĕр хамăрăн Чăваш республикĕнчи телейлĕ халăхсен пурнăçне куртăмăр. Колхозсен чечекленекен уй хирĕсем, çĕнелекен йалсем, хапрăк-саватсем, телейлĕ çынсем пире вĕçĕмсĕр савăнтарчĕç. Пур çĕрте те телейлĕ те тулăх пурнăç йĕшĕрет. Çак велочупу хыççăн епĕр хамăрăн Чăваш республикĕне тата ытларах йуратрăмăр.

Агитсамольот

ВĂРМАР. Шупашкартан вĕçсе тухнă агитсамольот июнĕн 29-мĕшĕнче Шăхаль йалĕ патне анса ларчĕ. Самольот анса ларнă çĕре 1.000 çынна йахăн пухăнчĕç. Унтах митинг пулса иртрĕ. Агитсамольот çинчи агитатăр РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсенче коммунистсемпе партире тăманнисен Сталинла блокĕ калама çук чаплă çĕнтерÿ туни çинчен каласа пачĕ.

Митингра тухса каланă колхозниксем кăçалхи тырпула лайăх пухса кĕртме пулчĕç.

И. Зайцев.

Горькири футбол команди Шупашкара килчĕ

Ĕнер, июлĕн 4-мĕшĕнче, Горькири Хĕрлĕ Çар çурчĕн футбол командийĕ Шупашкара килчĕ. Хĕрлĕ Çар çурчĕн команди Горький хулинчи ăмăртура пĕрремĕш группăра выльанă, хулари вăйлă командăсенчен пĕри, Горький футболисĕсем пайан, июлĕн 5-мĕшĕнче, Шупашкарти „Спартак" обшчествин футбол командипе тĕл пулса выльаççĕ. Июлĕн 6-мĕшĕнче те „Спартак" команди выльать, анчах ку вăййăра „Спартак" командине „Буревестник" командинчи выльакансене илсе çирĕплетеççĕ.

Йапăх ĕçлет

М. Платонăв 1928 çултанпах Тепте йалсоветĕнчи Бехтерев йачĕпе тăракан колхоз (Тутаркас р.) председателĕ тулса ĕçлет. Нумай çул хушши председател пулса ĕçлени вăл аван, ун пек чухне колхоз председателĕ ĕçе хăнăхса çитсе колхоз ĕçне лайăх организацилеме пултарать. М. Платонăв йулташ малтанхи çулсенче чăнахах та лайăх ĕçлесе пычĕ, анчах йулашки çулсенче йапăх ĕçле пуçларĕ.

Колхозра колхозниксен пухăвĕ çулталăкĕпе те пĕр-икĕ хутчен çеç пулать. Ĕç нормисене, производствăлă плансене нихăçан та колхозниксен пухăвĕнче йышăнни çук. Колхозниксем гектартан миçе пăт тырă тухнине те, пурĕ миçе ĕç кунĕ тунине те пĕлмеççĕ.

Тырпулсене валеçнĕ чухне кашни çулах тĕрлĕ фондсенче тырă йулать. Çав фондсенчи тырра ăçта расхутласа пĕтерни çинчен те колхозниксем пĕлмеççĕ, ăна ревизи комиççийĕ те пĕлмест. Ревизи комиççи членĕсем правленийĕ пырсан, Платонăв çапла калать: „Ревизи тума халь йершу çук, кĕркунне тăвăпăр," тет. Çавăн пекех укçатенкĕ йенĕпе те чылай вăхăт хушши ревизи пулман.

М. Платонăв йулташ çаплах начар ĕçлесен, колхоз ĕçĕ малашне йапăхма пултарать. Районри Çĕрĕç пайĕн çавна асăрхамалах.

Н. Амелăв.

Тÿрлетни

„Чăваш Коммунĕ" хаçатăн ĕнерхи (152-мĕш) номĕрĕнче пичетленсе тухнă Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ „Выльăх-чĕрлĕх ерчетмели 1938 çулхи государствă планĕ çинчен" йышăннă постановлени çумне хушса çырнисенчен 1-мĕш таблицăра „Сурăхсем" тенĕ графара Тăвай районĕ тĕлĕнчи цифрă йăнăш пичетленнĕ, ăна—„1350" вуламала, 5-мĕш таблицăра „Ăратлă сысна аçисемпе чуптармаля" тенĕ графа айĕнчи „Пĕтĕмпе" тенĕ графара Тутаркас районĕ тĕлĕнче—„3200" вуламала; 6-мĕш таблицăра „Хĕрлĕ горбат ăратăри" графара Çĕмĕрле районĕ тĕлĕнче нимĕн те пулмала мар; 9-мĕш таблицăра „зоотехникă участкисем" тенĕ графара Тутаркас районĕ тĕлĕнче „5", Йетĕрне районĕ тĕлĕнче „6" шутламала; çав таблицăрах „Ветбаклабораторисем" тенĕ графара Йĕлчĕк районĕ тĕлне „1" пичетленнине Шупашкар хулин—шутламала.

Ачасен çулахи варвитти çинчен

Ача организмĕ çутçанталăкри тĕрлĕрен чир-чĕрсене, ÿссе çитеннĕ çынăн организмĕ пек мар, çăмăлрах парăнать. Çавăнпа та ачасем çитĕннисенчен ытларах тата йăвăртарах чирлеççĕ. Ачасен пурнăçĕпе сывлăхне сыхлас тесен вĕсене лайăх гигиенă хушнă пек йĕркелĕ пăхмала.

Ачасем уйрăмах вар-хырăм пăсăлнипе аптăраççĕ. Кун пек чух ача хăсать, варвиттине кайать, чĕри вăйсăрланать. Ачан ăшĕ пăсăласси ăна çитерме пĕлменнинчен йе унăн организмне пĕр-пĕр микробсем лекнинчен килет.

Тĕрĕс мар хатĕрленĕ çуллă апат, ачан çулĕпе килĕшмен йăвăр апат, пăсăлнă йе таса мар апат—çаксем пурте ачан вар-хырăмне пăсаççĕ, ача хăсма тытăнать, варвиттине кайать. Ачана нумай вăхăт хушши выçăхтарса пурăнса кайран апат çитерни те пăсать. Амăшĕн кăкăрĕнчен ир уйăрса ахаль апат çитерме пуçланине пĕчĕк ача уйрăмах йăвăр тÿссе ирттерет.

Ачан вар-хырăмĕ кун пек чух панă апата пĕçерсе кăларма пултараймасть. Вар-хырăмра пĕçерĕнмен (йе пăсăлнă) апат унăн хырăмлăхĕпе пыршисене ыраттарать, пыршăсенче тăвăнса ларса ытларах пăсăлма тытăнать, кунта тата апата пăсма пыршăри микробсем те пулăшаççĕ. Вар-хырăмри микробсем пăснă апатăн йулашкийĕ ача организмĕшĕн питĕ сийенлĕ. Çав сийенлĕ йапаласем пăтратнипе ача хăсать, çине-çинех тула тухать, шĕвĕ варвиттипе пĕрле унăн хырăмра пиçсе çавăрăнман апат тĕпренчĕкĕсем тухаççĕ.

Ача хырăмĕ ыратнипе асапланать, кансĕрленет, çĕтĕлет, апат çийейми пулать, ыйăхсăрланать, начарланать. Анчах ку вар-хырăм пăсăлнин пĕрремĕш тапхăрĕ çеç-ха (острая диспепсия). Ашшĕ-амăшĕсем тимлĕ пулса тухтăртан вăхăтра пулăшу ыйтсан, ĕç çакăнпа чарăнма та пултарать.

Хăш чухне вара, вăхăтра асăрхаса илмесен, чир шалала кайать. Варвитти вăйланать, ача питĕ шĕввĕн тула тухма пуçлать. Температурă ÿсет, ача начарланса кайать, куçĕсем ун шалала путса кĕреççĕ, пичĕ тĕссĕрленсе шуралать, ÿт-тирĕ пушанкăланать. Ача куçĕсене чарса, инçете пăхнă пек тунсăхан пăхать. Чĕри питĕ вăйсăрланать, ăс-тăнĕ чакать. Ку пĕтĕмпех вар-хырăма сийенлĕ йапаласем витиинчен тата çавна пула ачан чи паха органĕсем: чĕри, ÿпки, пĕверĕ, пÿри, нервисем сарăпланнинчен килет.

Ачан вар-хырăмĕ çеç мар пĕтĕм организмĕ, йулашки читлĕх йулмиччен, пăсăлса кайать. Ку чире врачсем—токсическая диспепсия, теççĕ. Вăл йăвăр, вĕлерекен чир. Ку чирпе чирленĕ ача пульницăна кайа йулса лексен. унтан сывалассине кĕтме йăвăр. Елĕк-авал ку чире ача-пăча холери тенĕ, мĕншĕн тесен, вăл чăн-чăн холерă майлăрах.

Пĕр çул тултарман ачасем токсическая диспепсия текен чирпе ыттисенчен нумайрах чирлеççĕ. Икĕ çулхи йе унтан иртнĕ ачасем хушшинче ку чирпе чирлекенсем пăчах сахал.

Мĕнрен килет-ха ачасем çавăн пек йăвăр чирлесе ÿкесси? Чи малтан вăл пĕчĕк ачана амăшĕ кăкринчен уйарса ахаль апат çитерме пуçланинчен килет. Ĕне сĕчĕпе ир тăрантарма пуçланă ачан сывлăхĕ амăшĕн кăкрине ĕмсе ÿсекен ачан сывлăхĕнчен начартарах пулать, чир-чĕрсене те кун пек ача çăмăлрах парăнать.

Диспепçипе чирличчен ача мĕнле те пулин урăх чирпе (грипп, хĕрлĕхен чирĕсемпе, хăлха йухнипе, ÿт шыçнипе йе тата çăмăл диспепçипе чирленĕ пулсан, диспепçи чирĕ уйрăмах йăвăр пусса ÿкерет. Çавăн пекех вăрăма тăсăлса пыракан туберкульоз, диатез (йун пăсăлни) чирĕсемпе чирленĕ ачасем диспепçи чирне ыттисенчен ытларах парăнаççĕ.

Ашшĕ-амăшĕсем ачисене нумай чухне пăхма пĕлмесĕр чирлеттереççĕ. Ачана ытлашши ăшăра тытни диспепçи чирĕ пуçланассин паллă сăлтавĕ пулса тăрать.

Пĕчĕк ача ун йĕри-таврашĕнчи температурă улшăнса тăнине йуратмасть. Хĕвел çинче йе ăшă та пăчă пÿлĕмре нумай вăхăт тытни ачашăн питĕ сийенлĕ. Ачана ытлашши ăшăра тытни ун организмĕнче йăвăр формăлă диспепçи пуçланмали майсем туса парать: хырăмлăхра апата пĕçерсе кăларма пулăшакан сĕткен сахаллăн тухма пуçлать, пыршăсем куçма чарăнаççĕ, пĕвер тĕрĕс ĕçлеме пăрахать, йун пахалăхĕ улшăнать тата ыт. те. Çитменнине тата ачана ытлашши ăшăра тытни сийенлĕхĕ сийенчех мар, темиçе кун иртсен тин паллă пулать.

• • •

Ачасен çулахи варвитти чирĕсенчен диспепçисĕр пуçне тата дизентери пур. Ку чирпе çитĕннисем те чирлеççĕ.

Дизентери (йунлă варвитти) чирĕ çулталăкĕпех çÿрет, анчах çулахи вăхăтра ăна сарăлма ытларах майсем пур. Ку чир сасартăках вăйлăн пуçланать, температурă хытă ÿссе кайать, çын хăсать, шăмшакĕ питĕ йăвăрланать. Çыннăн пĕр талăк пĕтнĕ çĕреле темиçе хут тула тухнă хыççăн, сĕлехелĕ, йунлă варвитти пуçланать. Кайрантарах çын талăкне 30—50 таран тула тухма пуçлать.

Ача мĕн чухлĕ пĕчĕкрех, дизентери чирне çавăн чухлĕ йăвăртарах тÿссе ирттерет. Чăн та, хушăран çăмăл кăна чирлекенсем те пур—ача кун пек чух тула сайрарах тухать, варвиттийĕнче йун та сахалтарах пулать йе пăчах пулмасть. Кун йышшисем 5—6 кунта чирлесе ирттереççĕ. Йăвăр чирленисем 10—15 кун ытла асапланаççĕ.

Дизентери—питĕ йерекен чир, вăл уйрăмах ачасем хушшинче хытă сарăлать. Дизентери йертекен микробсем чĕрĕ апат çимĕç урлă (уйрăмах çуман пахча-çимĕçсемпе çырласем урлă) сарăлаççĕ. Алă çумасăр апат çиме ларни те ку чирĕ сарăлма пулăшать. Нумай чухне дизентери микробĕсене шăнасем хăйсен урисем çинче—уборнăйсенчен, мăшкăлтăк шыв йамали лакăмсенчен, таса мар ача кипкисем çинчен тата ытти çĕртен илсе килеççĕ. Çапла ĕнтĕ чирлĕ çын хăй, вăл тула тухнă йулашкийĕсем, унăн йапалисем сывă çынна чир кÿрекен йапаласем пулса тăма пултараççĕ.

Вар-хырăм пăсăлни (токсическая диспепсия) тата дизентери чирĕсем ачасене питех те нумай çулса каяççĕ. Çавăнпа та пирĕн врачсем тата ача-пăча ашшĕ-амăшĕсен çулахи варвитти чирĕсемпе кĕрешес ĕçе, ача-пăчана çав чирсемпе чирлесрен сыхлас ĕçе çине тăрса тимлĕн туса пымала.

Кашни ача амăшĕ хăйĕн ачине тĕрĕс тăрантарса пурăнмала, гигиенă ыйтнă пек лайăх пăхмала. Кÿревмеле йăнăшсем тăвас мар тесен, ача амăшĕ консультацине йĕркелĕн çÿремеле, врач кăтартса панисене çирĕп туса пымала. Çулахи вăхăтра ачана кăкăртан уйăрма тата апата çĕнĕ, уйрăмах çулă йапаласем хушма йурамасть, ачана час-часах шыв ĕçтермеле, куллен шыва кĕртмеле йе çан-çурăмĕ тăрăх 30 градус таран ăшă шыв йарса илмеле, хĕвел çинче нумай вăхăт тытмала мар, пĕр çул тултарман ачасене хĕвел ваннинче вырттармала мар, пÿртре чÿрече кантăкĕсене талăкĕпех уçă тăратмала, ачана чăркамала мар, мамăк çивиттипе те хуплама йурамасть,—çакă çăмăл правилăсене кашни ача амăшĕ, кашни ача ашшĕ лайăх пĕлсе тăмала. Ача чирлени паллă пулсан, ун çинчен вăхăтра, 24 сехетрен кайа йулмасăр врача пĕлтермеле.

Ача амăшĕ ача организмĕпе ăна мĕнле пăхмали çинчен ытларах пĕлме тăрăшмала, вăл ку ыйтусемпе тивĕçлĕ кĕнекесем вуламала, лекцисемпе калаçусене итлемеле, консультацине çÿремеле, врачсемпе канашламала.

Ачасен сывлăхне сыхлас ĕçре ача амăшĕн культурлăхĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Санитарипе гигиенă правилисене пĕлекен ача амăшĕсем врач кăтартса панисене лайăх пурнăçа кĕртсе пыраççĕ, ачисене пăхнă чух, тăрантарнă чух йăнăшсем тумаççĕ, çапла мăй вĕсене чирлесрен сыхлаççĕ.

(Н. Сперанский профессăр статйинчен).

Ответлă редактăр Н. И. СЕМЕНАВ.

ШУПАШКАРТИ ÇĂКĂР ПĔÇЕРЕКЕН САВАТА
Квалификацилĕ пекарсем, Пекăра пулăшакансем
ТАТА
Булнă пĕçеренсем
КИРЛĔ
Çăкăр пĕçерекен савăт канторне пымала.

Уполномоченный Чувашглавлита № 336 Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста, заказ № 581.

Константин Борин

ССРС Верховнăй Совет депутачĕ, Штейнгард МТС комбайнерĕ, стаханăвĕц, орденоносĕц.

Иртнĕ çулта вăл хăйĕн комбайнĕпе 2 пин ытла гектар тырă пуçтарса кĕртнĕ.

(Пресскличе).

Ĕç план тăрăх пырат

Малтикасри (Вăрнар р.) „Пĕрлешӳ" колхоз вăйлă тырпулшăн кĕрешес тата тырпулсене уйран пуҫа кĕме хатĕрленес тĕлĕшпе районра малта пыракан колхозсенчен пĕри пулса тăрат. Ку колхозра пур ĕçе те вăхăтра тата пысăк пахалăхпа туса пыраççĕ.

„Пĕрлешӳ" колхоз иртнĕ çулта вăйлă тырпул туса илнипе Пĕтĕм Союзри йалхуçалăх выставкинче пулма тивĕçлĕх илчĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем хăйсен çитĕнĕвĕсене выставкăра кăтартма тивĕçлĕ пулнăшăн савăнса ĕçлеççĕ, йалхуçалăх ĕçĕнче тата пысăк çитĕнӳсем тăвассишĕн тăрăшаççĕ.

Колхозра 3 бригада. Ĕçлеме пултаракан колхозниксемпе колхозницăсем—180 çын. Бригадăсенче пурĕ 73 лаша. Тырпулсене пухса кĕме ĕç планĕ тунă. Ĕç планĕ тăрăх кашни çынна тата лашасене уйрăм ĕçсем çумне çирĕплетсе тухнă. Кашни колхозникпа колхозница хăйĕн ăçта тата мĕнле ĕçре ĕçлемелине тĕпллĕн пĕлсе тăрат.

Кăçал колхозăн 214 гектар çинчен тĕштырă пухса кĕмеле. Ĕç планĕ тăрăх ыраша 6 кун хушшинче пухса кĕме палăртнă. 100 гектар ырашран 80 гектарне жнейкăсемпе вырмала. Кашни бригадăра пĕрер жнейкă. Вĕсем пурте ĕçе хатĕр. Çуртрисене пĕтĕмпех жнейкăсемпе 10 кун хушшинче пухса кĕмеле.

„Пĕрлешӳ" колхозри бригадăсем тырпулсен уйĕсене таса тытса тăраççĕ. Калчасене виçшер хут çумланă. Çум çумлас тĕлĕшпе виççĕмĕш бригада йаланах малта пычĕ.

Бригадăсем утă çулма хатĕр тăраççĕ. Çавасем, лапаткасем хатĕр. Халь колхозниксем клевĕр çулма тухрĕç.

Тырпулсене пухса кĕнĕ вăхăтра ачасен йаслĕ тата столовăй организацилеççĕ. Çуртсем, апат-çимĕçсем çителĕклĕ.

Кĕлтесене турттарма урапасем хатĕр. Кĕлте турттаракансене уйăрса хунă. Молотилкăсем йусавлă. Вĕсене çуса тасатнă. Колхозăн пĕр автомашинă пур. Ăна та йусаса лартнă, горйӳчисене хатĕрленĕ. Малтанхи таса та паха тырра государствăна автомашинăпа леçсе параççĕ.

К. Нарышкин.

Тырпулсене вăхăтра тата тăкаксăр пухса кĕретпĕр

Пирĕн, Кольцовка (Вăрнар р-нĕ) колхозĕн, кăçал кĕрхи тырăсемпе çуртрисене 917 гектар çинчен пухса кĕмеле. Епĕр тырă пĕрчисем ăвăс пек хытсан суйласа вырма тытăнатпăр. Кашни бригада хăйĕн участкинчи тырăсене уйрăмăн пухса кĕрет. Вăйлă тырпул звенисем хăйсен участкисем çинче пĕтĕмпех—тырпулсене вырассинчен пуçласа авăн çапас ĕç пĕтиччен—хăйсем ĕçлеççĕ. Çуртрисене пĕтĕм лаптăкĕпех пулса çитиччен суйласа вырма тытăнатпăр.

Кăçалхи тырпула пуçтарса кĕме епĕр çапла ĕç планĕ тунă:

Комбайнсемпе ĕçлесси

Комбайнсемпе тырпулсене вырма тухсан 3—4 кун иртнĕ хыççăн, тырпулсем пĕтĕм лаптăкĕпех лайăх пулса çитсен, ĕçлеме тытăнатпăр. Комбайнсемпе 200 гектар, вăл шутран 139 гектар кĕрхи тырă, 70 гектар сĕлĕ пухса кĕмеле. Комбайнсемпе ĕçлеме чи лайăх участкăсене уйăрнă. Епĕр вĕсене лайăх çумласа тасатнă.

Комбайн патĕнче ĕçлеме уйăрнă çынсем участкăсене кашни кун сăнаса тăраççĕ. Комбайн ĕçленĕ чухне ăна пулăшма епĕр йатарласа пĕр звено тунă. Çак звенора 17 çын, 8 лаша, пĕр автомашинă.

Кĕрхи тырăсене кашни кун комбайнпа 20 гектар, кашни гектартан 28—30 центнĕр пухса кĕме палăртнă. Çуртрисене—30-шар гектар, кашни гектартан 20—25 центнĕр тырă пухса кĕреççĕ. Комбайнпа ĕçлекенсем çак палăртнă нормăсемшĕн ăмăртаççĕ.

„Коммунар" комбайнпа куллен 20—30 гектар пухса кĕрес тесе комбайнерсем рабочи ĕç кунне 20 сехете çитереççĕ, çакăн пек ĕçлеме комбайн çинче електроарматурă тата динамо-машинă майлаштараççĕ. Бункертан комбайн ĕçленĕ чухнех тырăна автомашинă çине пушатса пыраççĕ.

Комбайн патĕнчи ĕçе тĕрĕс организацилеме мĕн кирлине тата çменăсене вăхăтра улăштарса пыма кирлĕ ĕçсене халь туса çитернĕ. Çапла ĕçленипе комбайн хăйĕн талăкри тухăçлăхне чылайах ӳстерме пултарат.

Комбайнерсем тырпулсене пухса кĕме тытăниччен 5 кун малтан уйа тухаççĕ. Вĕсем унта комбайна ĕçлеме майлаштараççĕ, çынсем ĕçлеме хатĕр пулнине тĕрĕслеççĕ. Çакăн пек тунипе комбайн пĕр чарăнусăр ĕçлеме тытăнат.

Комбайнпа ĕçленĕ чухне, йатарласа уйăрнă звенори çынсене çакăн пек майпа вырнаçтараççĕ: пĕрисем комбайн хыçĕнчен улăм пуçтарса пыраççĕ. Çапла тунипе епĕр çийĕнчех хăмăл сухи тума май паратпăр. Улăмсене турттарма йатарласа лашасем уйăрнă. Комбайнпа вырнă участкă çинче хăмăл сухине 6—8 сантиметр сухалатпăр. Трактăрсемпе сухаланисĕр пуçне лашасемпе те сухалатпăр.

Жнейкăсемпе вырасси

Жнейкăсене икĕ çменăпа ĕçлеттеретпĕр. Çакă ĕнтĕ ĕç тухăçлăхне чылай хăпартмала. Иртнĕ çулта рабочи кунĕ хушшинче И. Дормидонтăв колхозник 7—8-шар гектар вырса пынă. Кăçал пуриншĕн те жнейкăсемпе вырма çав нормăна йышăнтăмăр.

Жнейкăсемпе ĕçлеме чи опытлă колхозниксене: В. Нараткин, Ф. Йарошкин, Ф. Йакимăв, И. Нараткин, В. Ашаткин, И. Дормидонтăв, С. Сурăв, А. Салмин йулташсене уйăрнă. Кашни жнейка хыççăн 15 çын çыхса пыраççĕ, вĕсемех тĕмĕсем туса хăвараççĕ.

Вăрлăхлăх участкăсем

Вăрлăхлăх акнă участкăсенче тырпулсем лайăх пулса çитсен тин вырма тытăнатпăр. Вăрлăхлăх участкăсем çинчи тырпулсене пухса кĕрес тата авăн çапас ĕçсене 2—3 кун хушшинче туса иртерме палăртнă. Вăрлăхлăх участкăсене пĕтĕмпех ыттисенчен уйрăм пухса кĕрсе, уйрăм итемсем çинче çапатпăр. Çапнă тырра ВИМ-2 текен машинă витĕр кăларса тасатнă хыççăн çĕç дезинфекциленĕ ампарсемпе складсене хуратпăр.

Кĕлтесене капана хывассипе авăн çапасси

Кĕлтесене капана хывма тырпулсене пухса кĕме тухсан 4—5 кун иртнĕ хыççăн пуçăнатпăр. Кĕрхи тырă кĕлтисене 7—8 кун хушшинче, çуртрисене—4—5 кун хушшинче капана хывса çитеретпĕр. Капансем тума колхозри опытлă колхозниксене, сăмахран, П. Милицков, В. Нараткин т. ыт. те уйăрнă.

Тырпулсене пухса кĕме тытăннă хыççăн 5 кун иртсен МК-1100 текен молотилкăпа авăн çапма тытăнатпăр. Авăн çапассине 32 кун хушшинче вĕçлетпĕр. Итем çинче икĕ çменăпа, кашни çменăра 38-шер çын авăн çапаççĕ.

Çавăн пек ĕçлеме итем çине пĕр чăрмавсăр кĕлтесем парса, çапнă тырра турттарса тăратпăр.

Тырпулсене сыхлама шанчăклă колхозниксене уйăртăмăр. Итемсем çине каткасемпе шыв лартатпăр, витресем тата ытти йапаласем хатĕрлесе хуратпăр. Чĕлĕм туртма йатарласа вырăнсем тăватпăр.

Епĕр колхозниксен пĕрлехи пухăвĕнче кашни ĕçĕн нормине туса çирĕплетрĕмĕр. Государствăна кĕрхи тырăсене тата çуртрисене августăн 17-мĕш тĕлне пĕтĕмпех парса тататпăр.

260 гектар çинче кĕрхи тырăсене 5 кун хушшинче таса суртлă, вутпуççирен чӳхенĕ вăрлăхсемпе çейăлкăсемпе акса хăваратпăр.

Çĕнтăбĕрĕн 15-мĕшне 548 гектар çине кĕр сухи тăватпăр.

Пирĕн колхоз Ленин йачĕпе тăракан колхозпа ăмăртат. Пирĕн колхозăн тырпулсене кăтартулăн пĕр тăкаксăр пухса кĕме пур майсем те пур. Çак задачăна епĕр, пирĕн колхоз Пĕтĕм Союзри йалхуçалăх выставкинче пулма тивĕç илнĕскер, ăнăçлăн пурнăçласса шанатпăр. Халь пирĕн колхозниксем тырпулсене пуçтарса кĕме хатĕр тăраççĕ.

Колхоз председателĕ Н. П. Жарков.

Кок-сагыз—каучук паракан ӳсен-тăран

Кок-сагыз — пысăк пахалăхлă каучук паракан ӳсен-тăран, колхозсенче ăна луçласа 1934 çулти кĕркунне акнă. Халĕ çĕршер колхозсем кок-сагыз ĕрчетеççĕ. Çак ӳсен-тăрана 16,5 пин гектар акнă. 5 пин га çитес çулта пухса кĕме вăрлăхлăх хăвараççĕ, ыттине пухса кĕреççĕ.

Совет çĕршывĕн резинă промышлĕннăçĕ пуçласа колхозсем тунă çĕршер тоннă каучук илет.

Тырпулсене çумкурăксенчен вăхăтра тасатмала

ВĂРНАР. Зеленовкăри Ленин йачĕпе, Хорнсорти Чапайĕв йачĕпе тăракан колхозсем тырпулсене çумкурăкĕсенчен вăхăтра тасатса тăраççĕ. Чапайĕв йачĕпе тăракан колхозра çум çумланă çĕрте Н. Ивановпа А. Иванов йулташсем йертсе пыракан бригадăсем малта пыраççĕ. Вĕсем тырпул çинчи çумкурăксене йаланах вăхăтра тасатаççĕ.

Çав вăхăтрах районра хăшпĕр колхозсем тырпула çумкурăксенчен вăхăтра тасатас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлемеççĕ-ха. Чи малтанах Мăн Турханти колхоз çинчен каламала. Ку колхозăн уй-хирне çумкурăксем пусса илнĕ. Колхоз правленинче ĕçлекенсемпе бригадирсем правлени пулĕмĕнчен тухмасăрах вăйлă тырпул туса илесшĕн пулас. Колхозра тырпул çинчи çумкурăксене тасатса тăрас тĕлĕшпе йатарласа звеносем уйăрман. Колхозниксемпе бригадăсем хушшинче тырпул туса илес тĕлĕшпе чăн-чăн кĕрешӳ пуçласа йаман.

Çĕнйалкасси, Кивйахакасси, Апнер колхозĕсем те çумкурăксемпе начар кĕрешсе пыраççĕ.

Çумкурăкĕсем тырпула ӳсме чăрмантараççĕ, тырпул тухăçне чакараççĕ. Çавăнпа та кашни колхозра тырпула çумкурăксенчен вăхăтра тасатмала. Ĕçре малта пыракан колхозсен паха опычĕсемпе анлăн усă курмала.

Н. Козлов.

Бригадирсем йертсе пымаççĕ

Улаксарти Сталин йачĕпе тăракан колхоз (Шăхасан р.) членĕсенчен чылайĕшĕ хăйсен правленийĕ çине тарăхаççĕ. Тырпулсене пуçтарса кĕртес ĕçе хатĕрленес тĕлĕшпе тумали ĕçсем пит нумай, колхозниксем ĕçлесшĕн, анчах ĕç хушакан çук—нарйад памаççĕ. Колхозра виçĕ бригадăн 3 жнейка пур. Вĕсене виççĕшне те йусамала. Халь жнейкăсем те, молотилкăсем те ванчăк лараççĕ.

Ку вăл машинсем пирки. Анчах çурла-çавасем пирки те ĕç çавăн пекех тăрат — пĕри те хатĕр мар. Çавăн пекех михĕсем, вĕренсем тата урапасем те çитмеççĕ. Лашасем те начар.

Витнĕ итем çине кайса пăхсан, вăл вара пачах хатĕр мар. Çине те витмен, ăшне те тасатман. Ăçта май килнĕ унта çӳп-çапсем, кивĕ улăмсем сапаланса выртеççĕ.

Кăçал колхозра лаша вити тума тытăннăччĕ. Йуписене те лартнăччĕ. Колхоз правленийĕ йертсе пыман пиркийех халь вăл ĕç те чарăнса ларчĕ.

Çапла ĕнтĕ, Улаксар колхоз руководителĕсен ĕçĕнче малашне татăклă улшăну пулма кирли курăнат. Колхоз правленийĕн тата бригадирсен колхозниксене ĕçре йертсе пымала.

М. Григорйĕв.

Хатĕрленмен çĕрте

Тырă вырма тухас вăхăт çывхарат. Тутаркас районĕнчи чылай колхозсем тырпулсене пухса кĕме йапăх хатĕрленеççĕ-ха.

Шашкар йалсоветĕнчи „Крестьянская газета" колхозăн жнейкисем, лобогрейкисем ванчăк лараççĕ. Тырпулсене хумали апмар тăррине витмен, çăмăр анат. Тырă вырнă вăхăтра 45 урапаран кайа мар кирлĕ, пайанхи куна кӳлме йурăхлисем 10 урапа çĕç.

Апчар йалсоветĕнчи „Сеялка" тата „Прожектор" колхозсенче те тырпулсене пуçтарса кĕнĕ чухне кирлĕ машинсем йусавлă мар. Пушкăрт йалсоветĕнчи Блӳхĕр йачĕпе тăракан колхозăн тырă вырма тухма лаша таврашсем çитмеççĕ.

Районри колхозсен уй-хирĕнче çумкурăксем кашласа лараççĕ. Ийунĕн 29-мĕшне районĕпе пĕтĕм çуртри уйне 18 процент çеç çумланă.

Тырпулсене пуçтарса кĕме хатĕрленес тĕлĕшпе район кайа йулса пыни, пĕр йенчен, райçĕрĕç пайĕ колхозсене йертсе пыманнинчен килет. Райçĕрĕç пайĕн работникĕсем колхозсенче сахал пулаççĕ, колхозсене пулăшса памаççĕ.

М. Исайĕв.

Колхозсенче

Ерше-пуçĕнчи „Трудовик" колхоз (Вăрнар р.) хĕрсех тырпулсене пухса кĕртме хатĕрленет. Халь тырă вырмали машинсене пурне те йусаса лартрĕç. Бригадăсемпе бригадăсем пĕр-пĕринпе социалисăмла ăмăртса ĕçлеме йышăнчĕç. Бригадăсем пурте хăйсен витнĕ итемĕсене йусаса çĕнĕрен витсе лартрĕç. Халь ĕнтĕ çăмăр çунă вăхăтра та авăн çапма май пур.

Иртнĕ çулсенче колхозăн автомашинă пулман. Кăçал государствăна планран ытлашшипех аш-какай парса колхоз автомашинă илет, çав май государствăна тырă парса татассине те колхоз хăвăрт иртерме шутлат.

А. Бурмистрăв.

Кĕрхи тырăсем пулса çитесси нумай йулмарĕ. Анчах Туппай Ĕсмĕлĕнчи „Красная Чувашия" колхоз çавна сисмест пулас, тырпулсене уйран пуçтарса кĕртес ĕçе хатĕрленме тытăнман та. Жнейкăсене иртнĕ çул мĕнле лартнă, халĕ те çавăн пекех лараççĕ. Кăçал Канашра пĕр жнейка илнĕ, ăна та пайан кунччен кӳрсе килмен. Урапасем çитмеççĕ.

Колхоз Сĕнтĕрвăрри районĕнче вăрлăх ĕрчетекен колхоз шутланат. Çапла пулсан та суртлă вăрлăх участкисем çинчи çумкурăксене çумлама халь çеç тухрĕç.

Г. М.

Шăмшешри „Мотор" колхоз (Хĕрлĕ Чутай р.) тырпулсене пухса кĕме лайăх хатĕрленсе пырат. Машинсене тата ытти ĕçхатĕрсене хатĕрленипе пĕрлех халь çĕнĕрен тырă типĕтмели туса лартрĕç.

Йак. С.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Выдвиженĕцсене ĕçре пулăшаççĕ

Канаш райĕçтăвкомĕ çумĕнчи пуçламĕш парторганизаци иртнĕ отчотпа суйлав пухăвĕ йышăннă решенисене пурнăçласа пырат.

Отчотпа суйлав пухăвĕ райĕçтăвкомра ĕçлеме колхозсенчен тата йалсовечĕсенчен илнĕ йулташсене йаланах пулăшса пыма çирĕп решени йышăнна. Райĕçтăвкомра выдвиженĕцсем чăнах та нумай. Акă вĕсем: Николайĕв—районти çĕрĕç пайĕн пуçлăхĕ, Разумăв—районти финанс пайĕнче ĕçлет, Петров — сулйĕр пайĕн пуçлăхĕ. Ку йулташсем виççĕшĕ те малтан йалсовет председателĕсем пулса ĕçленĕ. Тата выдвиженĕцсем: Çеменăв — промышлĕннăç пайĕнче ĕçлет, Павлăв—кадрсен секторĕн пуçлăхĕ, Симушкин—районри çĕрĕç пай пуçлăхĕн заместителĕ. Ку йулташсем малтан колхоз председателĕсем пулса ĕçленĕ.

Вĕсене парторг тата райĕçтăвром председателĕ Бугров йулташ ĕçре куллен пулăшса пыраççĕ. Кашни 10—15 кунтах çĕнĕ работниксемпе канашлусем пулса иртеççĕ, кама ĕçре мĕн çитмест, кама мĕн кирлĕ—çав ыйтусене пурне те канашлусенче сӳтсе-йаваççĕ.

Парторганизацинчи пур йулташсене те парти вĕрентĕвне хутшăнтарнă.

Парти кандидачĕсем пулнă Михайлăвпа Антонăв йулташсене йулашки вăхăтра парти членне куçарнă. Халь ĕнтĕ ку парторганизацинче „ватă" кандидатсем çук. Выдвиженĕц Разумăв йулташа нумай пулмаст парти кандидатне илнĕ. Пуçламĕш парторганизаци партире тăман работниксем валли те политика кружокĕ организациленĕ, — кружока Михайлăвпа Симушкин йулташсем йертсе пыраççĕ.

Отчотпа суйлав пухăвĕ пулнă хыççăн пуçламĕш парторганизацинче виçĕ пуху иртернĕ. Пухусене кĕтмен çĕртен мар, лайăх хатĕрленсе иртереççĕ.

Парторгăн—Васильйĕв йулташăн икĕ заместитĕл пур.

Вĕсем, Першĕвпа Николайĕв йулташсем, йаланах парторгпа пĕрле ĕçлесе пыраççĕ. Анчах ПСК(б)П Канаш райкомĕ парторг заместителĕсене пулăшас тĕлĕшпе нимĕн те туман-ха. Парторг заместителĕсене райкомăн ĕçлеме вĕрентмеле.

Райĕçтăвком çумĕнчи пуçламĕш парторганизаци комсомол организацине йертсе пырас тĕлĕшпе çителĕклĕ ĕçлемест-ха. Çак çитменлĕхе унăн халех пĕтермеле.

А. Михайлăв.

Зайом кăларнине тулли кăмăлпа кĕтсе илчĕç

ЙЕЛЧĔК. (Телефон тăрăх). Районри кашни йалсоветрах çĕнĕ зайом кăларнă йатпа хаваслă митингсем пулса иртеççĕ. Митингсенче ĕççыннисем, правительствăна çĕнĕ зайом кăларнишĕн ырласа саламлаççĕ. Йелчĕкре çĕнĕ зайом кăларнă йатпа митинг пулнă хыççăнах район центрĕнчи рабочисемпе служащисем, инженерлă-техникла работниксем 29 380 тенкĕлĕх çĕнĕ зайом илме çырăнчĕç.

Çак кунах колхозсенче зайома нумай çырăнчĕç. Халĕ районра кашни рабочи, служащи, колхозник пурте çĕнĕ зайома илме çырăнаççĕ.

ТĂВАЙ. ССР Союзĕн правительствин çĕнĕ зайом кăларнине район ĕçхалăхĕ тулли кăмăлпа кĕтсе илчĕ. Çĕнĕ зайом кăларнă йатпа ийулĕн 2-мĕшĕнче районри учрежденисенче, колхозсенче митингсем пулса иртрĕç.

Митинг хыççăнах район центрĕнчи ĕççыннисем çĕнĕ зайома 24.965 тенкĕлĕх çырăнчĕç. Зайом çырăнас ĕç халĕ вăйланçах пырат.

ШĂХАСАН. Çĕнĕ зайом çырăнас ĕç пур вырăнта та пысăк ăнăçлăхпа пулса пырат. Ийулĕн 3-мĕшне районри рабочисемпе служащисем хушшинче çĕнĕ зайома 62 пин тенкĕлĕх, колхозниксем хушшинче 25 пин тенкĕлĕх сарнă.

„Красный Октябрь" колхоз колхозникĕсем 2.020 тенкĕлĕх, „Красное Сормово" колхоз колхозникĕсем 1 095 тенкĕлĕх çырăнчĕç. Колхозниксем чылайĕшĕ çĕнĕ зайомшăн çырăннă вăхăтрах укçине тӳлесе татаççĕ. Шăхасанти вăтăм шкул директорĕ Димаков йулташ—çĕнĕ зайома 750 тенкĕлĕх çырăнса, укçине те çав вăхăтрах тӳлесе татрĕ.

КУВАКИНĂ. Районри предприйатисемпе учрежденисенче, колхозсенче пур çĕрте те çĕнĕ зайома пысăк çĕкленӳпе хĕпĕртесе çырăнаççĕ. Ийулĕн 3-мĕшне районĕпе 145 пин тенкĕлĕх зайом илме çырăннă. Ку шутран колхозсенче 83 пин тенкĕлĕх çырăннă.

Митта Петĕрĕ

Ашшĕн асламăшĕ

(Кавказран килнĕ калав)

Çăмăр пĕлĕчĕсенчен те çӳлĕ, чăнкă сăртсен хушшинчен пĕр пĕчĕкçĕ çырма шăнкăр-шăнкăр йухса айлăмала анат. Тăрна куçĕ пек таса, тăп-тăрă шыв. Тăрă шывла пĕчĕкçĕ çырма чуллă сăртсен хушшинчен аннă-анманах тинĕс шывĕпе хутшăнмаст, айлăмпала чылай лереле, кăнтăр-хĕвелтухăç йеннеле, кукăрkаланса тăсăлат. Çырма икĕ йенĕпе çимĕç пахчисем йешĕреççĕ. Ку пахчасенче апелçин, иçĕм çырли, мандарин, черешьă, çливă тата ытти, татах та нумай-нумай тĕслĕ йăвăççем чĕрĕлеççĕ.

Çак, йумахра мар, чăн-чăн пурнăçри илемлĕхпе капăрланнă пахчасен хыçĕне тăп-такăр сукмак тăсăлат. Сукмак хĕррипе, кашни çĕр утăмсеренех, сăрлă тенкелсем лартса тухнă. Пĕр тенкелĕ çинче авикĕ çамрăк. Икĕ çамрăк час-часах пĕр-пĕрин çине тата шăнкăр-шăнкăр йухса выртакан çырма шывĕ çине пăхса лараççĕ. Çамрăксенчен пĕри çавра питлĕ хĕр, таса çăл шывĕ пек тăп-тăрă куçлăскер, гитарăпа выльăт. Çумри каччă ун çине, унăн пысăк маçтăрлăхпа авкаланса выльакан пӳрнисем çине, пăха-пăха çурма сасăпа такмаклат:

Ăна еп куртăм ир çинче,
Вăл çăл пăнчен килетчĕ.
Сут йĕс хăлăплă витринчен
Мана хĕр шыв ĕçтерчĕ.

Тавтурăм епĕ кăмăлтан:
Мĕнле аван шыв, терĕм.
„Аван çав" терĕ вăл та,—
Урăхран чĕнмерĕ.

Хĕр йăл-йăл кулат. Куçĕсем çиçсе йалкăшаççĕ. „Йурла-ха, тата йурла" тесе каласса́нах туйăнаççĕ. Каччă хавхаланат. Каллех такмаклама пуçлат:

Ăна еп куртăм кăнтăрла,
Вăл тинĕсре ишетчĕ.
„Иш ес те, ăмăрт манпала!"
Тесе хĕр мана сĕнсеччĕ.

Итлерĕм епĕ кăмăлтан:
Капла аванçке, терĕм.
„Аван çав" терĕ те вăл та,—
Урăхран чĕнмерĕ.

Гитарă чарăнмасăр выльăт. Унăн тĕрĕссĕн ĕнерни хĕлĕхĕсем çамрăк чун-чĕрене чăнкă сăртсенчен те çӳлерех çĕклентерсе илемлĕ саслăн йăнтăраççĕ. „Йурла-ха, тата йурла" тесе каласса́нах туйăнаççĕ. Каччă хавхаланат. Каллех вăл, каллех, хĕр куçĕнчен пăх-пăха такмаклама пуçлат:

Ăна еп куртăм каçхине,
Çатра вăл, сценă çинчеччĕ.
Йем-йешĕл йăвăç пахчине
Хĕр сасси чĕнтĕрлетчĕ.

Итлерĕм епĕ кăмăлтан:
Аван йурланçке, терĕм.
„Чăнах-и?" терĕ те вăл та,—
Урăхран чĕнмерĕ.

Хĕр выльăт. Такмакланăçемĕн ăна выльăма çăмăллаанăçемĕн çăмăлланса пынăн туйăнат. Пăхат вăл: шăнкăртатса йухакан çырма шывĕ çине, инçех те мар сарăлса выртакан хумлă тинĕс çине, тӳпери хĕвел çине — тавралăха пăхат хĕр. Хутран-ситрен çумри такмакçă çине пăха-пăха илет. Каччăн йăл-йăл куллине хирĕç вăл та ăшă куçлă кулăпа ответлет.

Хĕр Дорийадă йатлă.

Асăннă такмакри сăмахсем пĕтĕмĕшпех хăйне тивеççĕ иккенне хĕр лайăх ăнланат. Çавăнпа йăл-йăл кулкалат вăл. Калат:—Начар мар йурлатăнçке, тет.

Ирсеренех Дорийадă çăл патне кайат. Шыв ăсса килет. Апат-çимĕç хатĕрлет. Апат-çимĕç хатĕрленĕ май, унăн тавра йаланах пĕр карчăк утăласа çӳренине курма пулат. Карчăк капăр тумланнă. Çамрăк Дорийадăна час-часах тăптăп савса илет вăл. Çав тĕри ăшшăн, кăмăллăн калаçат. Çав тери хаклă унăн Дорийадă, çав тери паха иккенне никам каламасăрах туйатăн.

Çимĕç пахчине тухат Дорийадă. Кашни йăвăç тĕмине, кашни кунсерен сăнат. Ма тесессĕн, пĕлет: пахчари йăвăççене сăнасах тăмасассăн, пăхмасассăн, тĕрлĕрен сийен кӳрекен хурт-кăпшанкăсене вăхăтра тасатмасассăн—вăл йăвăçсем нумайах ăрăçулă çимĕç парасçă ак та кĕт. Дорийадă ĕçлет. Ашшĕ мĕн хушнă—ăна итлет. Ашшĕ—пахча ăстаçи. Районри паллă пахчаçă. Таврари колхозсем ăна час-часах хăйсем патне чĕнсе çăмăл машинăпах лартса кайаççĕ. Лартса кайаççĕ те кирлĕ таран консультаци илсе йулаççĕ.

— Çамрăках мар ĕнтĕ манăн атте,—тет Дорийадă.—Епĕ унăн чи кĕçĕн хĕрĕ пулатăп. Манран аслисем тата улттăн.

Улттăн. Вĕсем çинчен, хăйĕн савнă тăванĕсем çинчен, калат Дорийадă. Вĕсенчен хăшĕсем Тбилисинче, Сухуминче, иккĕшĕ Мускавра. Вĕсенчен хăшĕсем доцент йе инженер, учител, тухтăр пулса ĕçлеççĕ. Тепри, Арктика институтĕнче вĕренекенни, Çурçĕре практикăна кайнă.

— Ху вара. Вĕренместĕн-им есĕ?

— Вĕренетĕпçке. Каникула çеç килнĕ.

* * *

Каçхине, ыран суйлав кунĕ тенĕ каçхине, тинĕс хĕрринчи йем-йешĕл йăвăç пахчинче çамрăк суйлавçăсен савăнăçлă вечĕрĕ пулчĕ. Пĕр пĕчĕкçĕ инсценировкăна шкул ачисем маçтăр выльаса пана хыççăн, сценă çине йурăçăсем тата ташăçăсем тухрĕç. Вĕсем хушшинче кулса тăран куçлă Дорийадăна часах палласа илтĕм.

— Дорийада!—терĕ вечĕрĕ йертсе пыраканĕ.—Халĕ ĕнтĕ пирĕн программă тăрăх, Дорийадă тухса „Полиятай пелина" опĕрăн пĕр сыпăкне йурласа парат. Дорийадă—Мускавра, консерваторинче вĕренекен студентка!

Тăвăллăн алă çупрĕ халăх. Пысăк маçтăрлăхпа йурласа пачĕ çамрăк Дорийадă. Хапал йышăнчĕç ăна. Татах та, татах йурлама ыйтрĕç. Дорийадă итлерĕ. Çакă каç вара Дорийадă камне, вăл пулас пултарулă актрисă иккене лайăххăн тавçăртăм. Халăхпа пĕрле хавхалансах алă çупрăм. Алă çупакансен хушшинче хайхи капăр тумланнă карчăка та, Дорийадăна часчасах тăп-тăп савса ачашлакан карчăка, курма пулчĕ.

* * *

Ирхине. Суйлава кайатпăр. Суйлав участкине кĕнĕ чухне паллаçă сасă, Дорийадă сасси, чĕнсе мана чарчĕ.

— Сывлăх сунатăп,—терĕ вăл.—Кайарах йулнăçке? Акă, асанне мана пайан пилĕк сехетрех вăратрĕ,—терĕ Дорийадă, çумĕнчех тăракан савăнăçлă сăнлă хайхи карчăк çине пăхнă май, йăл-йăл кулса:

— Манăн асанне çеç те мар вăл, аттен асламăшĕ пулат,—терĕ.

— Аçун асламăшĕ?

— Вара çав. Аттерен вăл хĕрех çул, манран тăхăрвунă çул аслă. Пайан ăна пĕрремĕш бӳллетен памĕç. Чи малтан, манран та малтан сасăларĕ.

— Çапла. Пуринчен те малтан сасăларăм. Иртнĕ суйлавра та çапла: Пыр-ха. Килте калаçăпăр,—терĕ сăмахсене хăвăрттăн татса калаçакан карчăк, Дорийадă ашшĕн асламăшĕ, çĕр те сакăр çулхи суйлавçă.

Кавказ, Хура тинĕс хĕрри.

Хаҫатсене пăхса тухни

Колхозниксен хаҫачӗ

Оринкинри „Хӗрлӗ Сормовă“ колхозра (Тутаркас р) тăватă ҫул хушши ӗнтӗ „Ҫӗнӗ пурнăҫ“ ятлă нумай тиражлă хаҫат пичетленсе тухать. Хаҫат колхоза ҫирӗплетессишӗн, колхозниксен пурнăҫне пуйăн та культурлă тăвассишӗн кӗрешес ӗҫре чăннипех вăйлă хӗҫпăшал пулса тăрать. Хаҫатăн хăйӗн активлă йалкорсем, колхоз производствинче ӗҫлекен ҫынсем пур. 3-мӗш бригадăн бригадирӗ П. Майков, 1-мӗш бригадăн бригадирӗ Р. Белков, колхозниксем—К. Мыслăв, А. Акрамовскайа, Е. Петрова, И. Архипăв, В. Иванов, М. Павлăв, Н. Леонтйӗв, В. Репин йулташсем „Ҫӗнӗ пурнăҫ“ хаҫатăн активлă корреспонденчӗсем. Хаҫат хăйӗн йалкорӗсем пулăшнипе колхозăн, колхозниксен пурнăҫӗне ӗҫӗсене пур йенчен те тӗплӗн ҫутатса пыма тăрăшать.

Апрелӗн 15 мӗшӗнче хаҫат колхозри пӗрремӗшпе иккӗмӗш бригадăсем ҫуракине тухма мӗнле хатӗрленсе ҫитнине кăтартать. Агротехника курсне нимӗн сăлтавсăрах вӗренме пыман Варвара Павлăвă тата Пелагейă Петровă колхозницăсене критиклет. Умстатйара „Хӗрлӗ Сормовă“ колхозăн ҫуракинче мӗн тумалине кашни бригадăн, кашни звенон конкретлă ӗҫӗсем тăрăх кăтартса парать. 7-мӗш номӗрте 2-мӗш бригадăн вăрлăх участки ҫинчен бригадир Павлăв йулташ ҫыруне пичетлесе, ытти бригадăсене те вăрлăх участкисем ҫинче уйрăмах тăрăшса ӗҫлеме чӗнет.

„Пирӗн колхоза Пӗтӗм Союзри Йалхуҫалăх Выставкине кӗртни ҫинчен нихăҫан та манма йурамасть. 1938 ҫулта иртнӗ ҫултинчен тата вăйлăрах тырă туса илсен выставкăра тата ытларах савăнăҫлăрах пулатпăр“.

Майăн 5-мӗшӗнчен пуҫласа хаҫат хăйӗн пӗтӗм вăйне РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечӗсен суйлав кампанине анăҫлă ирттерес ӗҫе хунă. „Ҫӗнӗ пурнăҫ“ суйлавсăсене Сталинла Конституци ҫинчен, суйлав саккунӗ ҫинчен, Чăваш АССР Ленин—Сталин парти йертсе пынипе тунă ҫитӗнӳсем ҫинчен номӗртен номӗрте ҫутатса пынă. Суйлав ыйтăвӗ тăрăх умстатйасем, заметкăсем ҫырса ЧАССР Верховнăй Совет депутатне суйлама кандидата тăратнă Данилăв тата Бычкова йулташсен пурнăҫӗпе, ӗҫӗсемпе тӗплӗн паллаштарнă. Тӳрех каламала, „Ҫӗнӗ пурнăҫ“ хаҫат суйлав кампанийӗнче коммуниссемпе партире тăманнисен сталинла блок кандидачӗсемшӗн большевикла агитацилерӗ. Хаҫат политикăлă-агитацилӗ ӗҫе колхоз умӗнче тăракан хуҫалăхлă задачăсемпе ҫыхăнтарса пырать. Ийунӗн 9-мӗшӗнче „Ҫӗнӗ пурнăҫ“ хаҫат:

„Умра пысăк ӗҫ тăрать. Пучăхлă тырпула кӗске срукра, нимӗн тăккаламасăр, пуҫтарса кӗртме халех хатӗрленсе ҫитмеле, утă ҫулса пуҫтармала“,

тесе ҫырать. Хаҫат ыйтăва конкретлă лартать. Вăл уйхирсене ҫум курăксенчен тасатас, машинсене, вӗсемпе ӗҫлекенсене, урапасене, шăналăксене, ампарсене пурне те ҫӗнӗ тырпула йышăнма хатӗрлесси колхозра мӗнле тăнине тӗплӗн ҫутатать. „70 ҫултан иртнӗ Вера Ҫтепанăвăпа Пелагейа Архипăвă ҫум ҫумланă ҫӗрте хăйсен нормисене икшер хут ытла тултарчӗҫ, пурте вӗсенчен пример илӗр“, тесе чӗнет хаҫат колхозницăсене.

„Ҫӗнӗ пурнăҫ“ хаҫат вылăх-чӗрлӗх ӗрчетес, пушартан сыхланас, государствă умӗнчи парăмсене вăхăтра пурнăҫлас ыйтусене те йӗркелӗ ҫутатса пырать.

Хаҫат пӗчӗк пулин те, колхозри тӗп ӗҫсене, хамăр ҫӗршыври политикăлă ӗҫсене ҫутатнă вăхăтрах, тӗнчери лару-тăру ыйтăвӗсене ҫутатма та вăй ҫитерет.

Колхоз клубӗнчи библиотекăна ҫӗнӗ кӗнекесем килни, пӳрт-ҫурта таса тытасси, йалти кооператив лавкин ӗҫӗсем ҫинчен ҫырнине те колхозниксем хăйсен хаҫатӗнче кулленех вулаҫҫӗ.

Хаҫат хăйӗн ӗҫне лайăхлатса пырать. Анчах унăн тунă ҫитӗнӳсемпе лăпланма йурамасть. Халӗ „Ҫӗнӗ пурнăҫ“ чӗлхипе каласан „ҫӳлӗ те ҫăра ӳсекен кӗрхи тырпулсене, тикӗс те кар шăтнă ҫуртри тыррисене—колхоз уйхирне йешӗл бархăт пек витсе тăракан сталинла тырпула“ пуҫтарса кӗртес задачă таврапа пӗтӗм колхозниксене мобилизацилемеле. Хаҫатăн политикăлă-агитацилӗ ӗҫе колхозăн хуҫалăх ыйтăвӗсемпе тачă ҫыхăнтарса пырса, колхоз ӗҫне, колхозниксен пурнăҫне тата вăйлатма, лайăхлатма малашне те вăйлăн тăрăшмала.

Культмассăлă ӗҫе йапăхтарнă

Иртнӗ ҫулсенче Лапсарти (Шупашкар р.) промысла ертелӗнче культмассăлă ӗҫе лайăх туса пынă. Ертел ку тӗлӗшпе республикăри ытти ертелсенчен малта тăнă.

Анчах кăҫал ӗҫе йапăхлатрӗҫ. Кружоксем (музыкă, фото, физкультура тата политвӗренӳ кружокӗсем) йулашки вăхăтра пачах ӗҫлемеҫҫӗ.

Вулав ҫурчӗ йаланах хупă тăрать. Ҫтена хаҫачӗ кăҫалхи ҫул пӗр номӗр кăна тухнă. Хутла пӗлменнисене вӗрентме тытăнман (вӗсем 47 ҫын).

Ҫак ҫитменлӗхсем культработник Флегонтăв ӳрӗк-сӳрӗк ӗҫленинчен килеҫҫӗ. Вăл ӗҫе лайăхлатас тӗлӗшпе нимӗн те тумасть. Ертел правлени председателӗ Николайӗв йулташ та ҫитменлӗхсене кура тăркачах „вăл ман ӗҫ мар“ тесе ларать.

Н. М Йашков.

Колхоз клубӗсем

ЕЛӖК. „Труд“ колхоз ҫак кунсенче 200 ҫын вырнаҫмалăх ҫӗнӗ клуб туса лартрӗ. Ҫӗнӗ клубра „Страна Советов“ ятлă кинокартинă кăтартрӗҫ. Клубра хӗрлӗ кӗтес пур, унта кӗнекесем нумай, хаҫат-журналсем килсе тăраҫҫӗ.

А. Орлов.

Вăрман хатӗрлевӗ йулса пынине пӗтерес пулать

Вăрман хатӗрлев планне тултарасси иккӗмӗш кварталта та ҫаплах начар пырать. Иккӗмӗш кварталта хатӗрлес плана 62,7 процент, турттарас плана 48,0 процент ҫеҫ тултарнă. Акшкӳль вăрманпромхозӗ анчах хатӗрлес плана 181 процент тултарнă.

Вăрман хатӗрлекен организацисем ҫакăн пек начар ӗҫлени промышленнăҫра, стройкăсенче тата халăх хуҫалăхӗн ытти участкисенче те йăвăрлăхсем тăвать. Ҫакна Чăваш вăрманпром руководителӗсем, вăрман работникӗсем ăнланмаҫҫӗ теме ҫук. Вӗсем плана вăхăтра тултарма кирли ҫинчен сахал мар сăмах ваклаҫҫӗ. Анчах вӗсем ӗҫлессинчен ытларах приказсем ҫыраҫҫӗ, резольуцисем йышăнаҫҫӗ, вырăнсăр шавлаҫҫӗ.

Чăвашвăрманпром руководителӗсем механизмсемпе туллин усă курма тытăнасси ҫинчен сахал мар хут ҫырнă. Калаҫнине, ҫырнине пурнăҫа кӗртсе пынă пулсан, механизмсем тахҫанах йӗркелӗ ӗҫлемеле. Анчах халӗ механизмсем мӗн пама пултарнинчен ҫуррипе те усă курмаҫҫӗ. Плана 35,4 процент ҫеҫ тултарнă. Вăрнар вăрманпромхозӗнче автомашинăсем ахаль лараҫҫӗ, Ҫӗмӗрлере трактăрсем йӗркелӗ ӗҫлемеҫҫӗ. Чылай вăрманпромхоз руководителӗсем рабочисен пурнăҫ условисене лайăхлатас ыйту ҫине ҫийелтен пăхаҫҫӗ.

Вăрман работникӗсен пысăк задачӗ вăл—пӗтӗм тимлӗхпе ӗҫлесе тăшмансем туса хăварнă сăтăр йулашкисене срукра пӗтерсе, вăрман хатӗрлевне малти вырăна кăларасси пулать. Массăпа тачă ҫыхăнса ӗҫлемеле, стахановецсен опычӗ ҫине тайанса стахановла йухăма вăйлатмала, ӗҫре ӳснӗ ҫынсене йертсе пырас ӗҫе куҫармала, вӗсене вӗрентмеле, дисциплинăна, йӗркелӗхе пăсакансене пӗр хӗрхенӳсӗр ҫӗмӗрсе пымала,—акă мӗн кирлӗ вăрман хатӗрлев планне ăнăҫлăн тултарса пыма. Хальхи вăхăтра кусене туни куранмасть-ха.

РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечӗсен суйлав кунне пирӗн республикăри ӗҫҫыннисем производствăлă пысăк ӳсӗмсем тунипе уявларӗҫ. Стахановецсен ретне пиншер рабочисем, инженерсем, техниксем, колхозниксем тăчӗҫ. Вăрманпромхоз руководителӗсен вӗсен пăха опычӗсене ҫирӗплетсе стахановецсен йышне тата та ӳстерсе плана тултармала тăвас пулать.

Иккӗмӗш кварталти вăрман хатӗрлев планне мӗнле тултарнине кăтартакан СВОДКĂ

Вăрманпромхозсемпе вăрманпункчӗсем	Плана тултарнă проц-па: Хатӗрлесси	Плана тултарнă проц-па: Турттарасси
Акшкӳль	181,7	85,1
Ҫӗмӗрле	88 1	41,0
Вăрнар	67,0	67,5
Йӗпреҫ	36,2	38,4
Кире	19,6	39,2
Улатăр	23,2	40,2
Шăмăршă	88,7	58,4
Алтышӗвă	—	153,0
Пӗтӗмпе	62,7	48,0

Иккӗмӗш кварталта механизмсемпе турттарас плана тултарнине кăтартакан СВОДКĂ

ҪУЛ ЙАЧӖСЕМ	Плана тултарнă процентпа
Кăмăшă	35,9
Сăр ҫулӗ	52,7
Акшкӳль	66,0
Кире	23,6
Соловйовăри	27,2
Чернореченски	34,3
Ҫăрăклă	26,1
Шăмăршă	37,0
Атрать	46,9
Канаш	34,7
Пӗтӗмпе	35,4

Траксем ответлемеҫҫӗ

ШĂХАСАН. Маӳшури инвалидсен ертелӗ производствă планне тултарас, ертел хуҫалăхне ҫирӗплетсе пырас тата ытти йенӗпе те лайăх ӗҫлеме пулса Трак районӗнчи „Майак“ ертеле социалисăмлă ăмăртăва чӗнчӗ. Ăмăрту договăрне ҫырни икӗ уйăх ытла иртрӗ ӗнтӗ, анчах траксем ҫаплах ответ памаҫҫӗ.

Ыйтас килет: хăҫан кӗтсе илме пулать-ши вӗсен ответне? Епӗр кӗтетпӗр.

Маӳшури ертел культработникӗ—В. Корнилăв.

Маҫтерскойне аслатаҫҫӗ

СӖНТӖРВĂРРИ. Камайӗвăри „Древообделочник“ аласталăх ертелӗн сӗтел-пукан тăвакан маҫтерской пур. Халь ҫав маҫтерскойне аслатма тытăнчӗҫ. Маҫтерскойри вальльи ҫӗнӗ двигатӗлпе ҫӗнӗ станоксем илсе килчӗҫ. Двигатӗл никӗсне тума тытăннă та ӗнтӗ.

П. С.

Ҫурт ҫийӗсене тăмпа улăм хутăштарса витеҫҫӗ

ВĂРНАР. Йермошкинăри Калинин йачӗпе тăракан колхоз членӗсем ҫуртсен ҫийӗсене вутра ҫунман йапаласемпе витме пуҫларӗҫ. П. Аристрăв, Й. Коротков, И. Артемйӗв, Д. Йевграфăв т. ыт. колхозниксем те пӳрт ҫийӗсене тăмпа улăм хутăштарса витрӗҫ.

Йермошкинă йалӗнче ҫурт ҫийӗсене вутра ҫунман йапаласемпе витесси сарăлсах пырать.

А. Владимирăв.

Вăрман-Йенӗш йалсовечӗн ҫекцисем

Вăрман Йенӗш йалсовет ҫумӗнче 11 ҫекци. Вӗсенче 90 активис. „Свобода“ тата „Звезда“ колхозсенче депутат групписем органзациленӗ, вӗсенче 80 ҫын.

Акă, финанс ҫекцинче 15 ҫын. Ку ҫекци лайăх ӗҫленипе, йалсовечӗ укҫа-тенкӗ пухас плана кашни кварталтах срукчен тултарса пырать. 1-мӗш квартал планне пӗтӗм тӳлевсем тăрăх 103 процент пурнăҫланă. II-мӗш кварталти плана та ытлашшипех тултарнă. Ҫекци членӗсем участкăсенче ăнлантарса парас тӗлӗшпе ӗҫлеҫҫӗ, укҫа-тенкӗ пухас плана пурнăҫлама пулăшаҫҫӗ. Уйрăмăнах Т. Данилăв, А. Петров, И. Петров тата Д. Титов йулташсем активлăн ӗҫе хутшăнаҫҫӗ.

Тăрăшса ӗҫлекен ҫекци членне И. Петрова Шăхасан районӗнчи финанс пайӗ налог агӗнтне илчӗ. Вăл 1934 ҫултанпах финанс ударникӗ. 1934 ҫулта ăна РСФСР Тӗпӗҫтăвкомӗ ударник значокне тата грамăтă парса премиленӗ.

Выльăх-чӗрлӗх ҫекци те тăрăшса ӗҫлет. Унăн руководителӗ 63 ҫулхи старик Куҫмин-Ҫтепан квартал пуҫламӗшӗнче ӗҫ планӗ тăвать, ҫекци членӗсемпе канашлусем ирттерет.

Йулашки ҫулсенче выльăх-чӗрлӗх ӗрчетес йенпе пысăк ҫитӗнӳсем тунă. 1932 ҫултанпа выльăх-чӗрлӗх йышӗ нумай ӳсрӗ. 3—4 ҫул кайарах сысна усракан колхозниксем сахал пулнă, халӗ 151 хуҫалăх сысна усрать. Ӗнесӗр хуҫалăхсем 1932 ҫулта 21 пулнă, халӗ вӗсем ҫук. „Звезда“ колхозра таварлă сысна ферми ҫулсерен ӳссе пырать. Кăҫалхи ҫул фермăра планпа 90 сысна пулмала пулсан, 135 сыснава ҫитнӗ. Сысна пăхакан Макҫимăвă Йевгенийа 4 ҫул хушши фермăра ӗҫлет. Вăл ҫекци членӗ, ăна колхоз темиҫе хутчен те премиленӗ.

Уй-хир ҫекци—лайăх ӗҫлекеннисенчен пӗри. Унăн руководителӗ Павлăв йулташ ҫекцине 1932 ҫултанпа йертсе пырать. Хальхи вăхăтра вăйлă тырпула пухса кӗме хатӗрленес тӗлӗшпе тăрăшса ӗҫлет. „Свобода“ тата „Звезда“ колхозсем тырпула пухса кӗме хатӗр.

Бригадăсенче ҫава-ҫурласене туптатса хунă. Тырпула пӗтӗмпех ҫум курăксенчен тасатнă. Ҫекци руководителӗ йаланах колхозсенче пулать, колхозниксемпе калаҫать, ҫекци членӗсен пухăвӗсене туса ирттерет.

Вăрман-Йенӗш йалӗ йулашки ҫулсенче паламала мар улшăнса ҫӗнелчӗ. Йулашки виҫӗ ҫул хушшинче 53 хуҫалăх ҫӗнӗ илемлӗ пӳрт лартрӗҫ.

Чылай колхозниксен сехетсем, ҫӗвӗ ҫӗлемели машинсем, музыкă инструменчӗсем, велоҫипедсем пур.

Йалсовечӗ РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечӗсен суйлавне лайăх хатӗрленсе ирттерсе йачӗ.

Йалсовет ҫекретарӗ Н. Михайлăв.

Пысăк кӗпер

ТĂВАЙ. Йенших Нăрвашпа Тăрмăш хушшинчи ҫырма урлă пысăк кӗпер тума пуҫланă. Ку кӗпере самообложени укҫипе тăваҫҫӗ.

Тырă вырма тухаччен кӗпере йалтах хатӗр тăвассишӗн платниксем пӗр-пӗрипе ăмăртса ӗҫлеҫҫӗ.

Г. Йакăвлӗв.

Йевропăри чи пысăк домнă кăмаки. Серго Орджоникидзе йачӗпе тăракан „Запорожсталь“ металлурги комбинатӗнче Йевропăри чи пысăк (чукун чи нумай шăратакан) домнă кăмакине ӗҫе йанă.

УКЕРЧӖК СИНЧЕ: 3-мӗш №-лӗ домнă. (Сойузфото) „Пресклише“.

Отпускран килнӗ ҫӗре

Кӗҫӗн командир Петров вăрманпа лагӗре таврăнать. Вăрман ҫине сарă хӗвел пăхать. Тӗлӗнмеле илемлӗ кăтра хурăнсем ҫине пăхса хӗпӗртет ҫамрăкăн чӗри. Вăл уҫă, таса сывлăшпа ҫăмăллăн сывлать.

Лагӗр курăнса кайрӗ. Палаткăсем, клубсем, канмали парксем, аллейăсем пайан татах та илемлӗрех, хитререх пек туйăнса курăнчӗҫ ăна. Батарейă палаткисем курăнсан Петров утăмне татах васкатрӗ. Вăл акă хăйӗн бойецӗсене курать. Вӗсем хушшинче батарейă командирӗ капитан Чартков йулташ та. Петров темшӗн хӗрелсе кайрӗ.

— Капитан йулташ! Кӗске сруклăха йанă отпускран таврăнтăм,—терӗ вăл кӗскен. Капитан унăн аллине хытă чăмăртарӗ те:

— Аван. Лайăх кантăр пулӗ тăван йалăрта?

— Питӗ лайăх,—терӗ те Петров, капитан ҫине, бойецсем ҫине пăхса илчӗ. Кашнин пичӗ ҫинче савăнăҫ, хаваслăх шевли ҫиҫсе йалкăшнине сăнарӗ.

— Лейтенант йулташ!—илтӗнчӗ саса, капитан сасси.

Петров хыҫалалла пăхрӗ. Вăл лейтенант формилӗ ҫынна куҫӗсемпе шырарӗ.

— Лейтенант Петров йулташ!—капитан Петров ҫине пăхрӗ. Петров ун ҫине, бойецсем ҫине пăхрӗ.

— Есӗр халӗ лейтенант пулатăр. Сире епӗ пайăнтан взвод паратăп. Оборонă Халăх Комиссарӗ Совет Сойузӗн маршалӗ Ворошилăв йулташ приказӗ тăрăх сирӗн вăтам командир формине тăхăнмала.

— Есть, товарищ капитан! Служу Советскому народу!

Петров ку сăмахсене хыттăн каларӗ. Унăн хăйӗн савăнăҫне пӗтӗм тавралăха, пӗтӗм тӗнчене пӗлтерес килчӗ.

Петров лейтенанта хăйӗн бойецӗсем сырса илчӗҫ. Петров кашнине алă пачӗ, вӗренӳ ҫинчен ыйтса пӗлчӗ.

Петров вӗсемпе пӗрле вӗреннӗ, ӗҫленӗ, каннă. Петров бойецсен чи ҫывăх, чи йуратнă йулташӗ. Вӗсем пӗрле пысăк театрта опӗрăсем курнă. Вӗсем пӗрле Хӗрлӗ плошчӗтпе иртнӗ. Йуратнă Сталина, Ворошилăва курнă.

Йев. Йени.

Мускав ҫар округӗ.

Й. Виктăрăв

ТӖНЧЕРИ ЛАРУ-ТĂРУ

Йулашки кунсенче каллех пӗтӗм Йевропă Испани ҫинчен куҫ илмест. Италипе Германи интервенчӗсем паттăр Испани халăхӗ хирӗҫ тăнине хуҫаймарӗҫ, ҫавăнпа халь ӗнтӗ вӗсем республикăлă Испанийе ăнтăхтарса ҫӗнтересшӗн, ăна пур йенчен те блокадăпа ҫавăрса илесшӗн, Испани республикине тулашри тӗнчерен йăлтах уйăрса хурасшăн тăрăшаҫҫӗ, ку тӗлӗшпе пӗтӗм вăй-халне хурса ӗҫлеҫҫӗ.

Йулашки кунсенче пулса иртнӗ ӗҫсенче интервентсен Испани халăхне хирӗҫ пыракан вăрҫă анлăланса кайни ҫеҫ мар, тата чăннипе илсен буржуалă-демократилӗ текен государствăсем агрессăрсене уҫҫăнах пулăшса пыни те паллă вырăн йышăнса тăрать. Чăнах та, интервентсен самольочӗсем Франци территорийӗ ҫине пырса бомбăсем пăрахнă хыҫҫăн Франци Францийе Испани хушшинчи чикӗве пачах хупса лартман-и вара? Фашиссен намăссăр провокацине хирӗҫ ответлесе Франци тивӗҫлӗрех ответ пама пултарайман-им, вара? Ҫук, вăл кайала чаксан авăнрах пулать тесе шутланă. Ҫапла тума ыйтнă Муссолини, Францири реакци тата Англии конҫервативлă правителствин ҫавăн пек тума ыйтнă.

А Англи? Англи пăрахучӗсем ҫине пӗр чарăнса тăмасăр, йурийех бомбăсем пăрахнине хирӗҫ ответлесе, Британи правителстви хăй премйерӗн Невил Чемберленăн чӗлхипе ҫапла каланă: Англин тинӗсре ҫӳрекен пăракучӗсене сыхлас ӗҫе „правителствă хăй ҫине илме пултараймасть, интервентсен вăрă-хурахла ӗҫӗсем тӳрех Англи интересӗсене сийенленӗ тӗлсенче те правителствă „невмешательствă“ политикине пăрахмасть, тесе каланă. („Невмешательствă“ политики—Испанири ӗҫсене хутшăнас мар текен политикă). Британи правителстви унтан лайăхраххи нимӗн те тупайман ӗнтӗ.

Тарăхса ҫитнӗ Англи обшчественнăҫӗ правителствăран намăссăрланса кайнă интервентсене хирӗҫ тивӗҫлӗ ӗҫсем тума ыйтсан, Испанири хӳтлӗхсӗр халăха тискеррӗн вӗлерессине чарма ыйтсассăн, халăх шухăшне тӗрӗс ҫул ҫинчен пăрса, пăтраштарса йарас тесе тата республикăлă Испанийе пăвса пăрахасшăн тăрмăшакан интервентсене пулăшу парас тесе тӗлӗнмеле киревсӗр провокаци шухăшласа кăларса, ăна ӗҫе кӗртсе йараҫҫӗ.

Мӗнле ҫуралнă-ха вăл провокаци? Англи правителстви: бомбăсем пăрахса ҫӗмӗрсе пӗтернӗ хӳтлӗхсӗр хуласене тӗрӗслесе пăхма комиссии йама план туса хатӗрленӗ, тесе пӗлтернӗ. Ҫавăн пек хуласем ҫине бомбăсем пăрахасси чарăнма мар, татах вăйлăланса кайнине кура, Испани республикин Парижри тата Лондăнри посолӗсем ун ҫинчен Англипе Франци правителствисене пӗлтернӗ тата ҫакна астутарса хунă: ҫавăн пек бандитла тапăнусене тума чарăнмасассăн республикă правителстви ирӗксӗрех ответлă мерăсем йышăнмала, пăлхавҫăсем туртса илнӗ хуласем ҫине, сăмахран, Саламанкăпа Бургос ҫине бомбăсем пăрахмала пулать, тенӗ. Испани посолӗсем ҫавăн пек каланине Англири тата Францири реакцилӗ хаҫатсем йурийех пăсса, урăх шухăшлă туса пичетлесе кăларнă, уйрăмăн илсен Рейтер агентстви ҫапла пӗлтернӗ: Испани правителстви Неапольпа Генуйа ҫине тата Италин ытти хулисем ҫине те бомбăсем пăрахассипе хăратать, тенӗ.

Англипе Франци реакцийӗ шухăшласа кăларнă ҫак провокацие республикăлă Испани ҫинчен тискер елек сарас ӗҫре усă курнă. Ҫакăн хыҫҫăнах республикăлă Испани адрӗсӗпе Англипе Францирен „виҫерен иртме кирлӗ мар“ тесе асăрхаттаракан канашсем персе тухаҫҫӗ, Берлинпа Римран хăратас шутлă йунавлă сасăсем тăкăнма пуҫлаҫҫӗ. Провокацине мӗн шутпа кăларни [illegible] Римпа Берлинра тӗрӗс ăнланс[illegible] илнӗ, вӗсем ăна интервенцийе анлăлатма, Испани республикине хирӗҫ пыракан вăрҫăна ҫӗнӗрен анлăлатма хушакан ҫигнал вырăнне хурса ăнланнă.

Чемберлен правителстви ҫине тăрсах ытти халăхсене сийен кӳрсе агрессăрпа килӗшӳ тумали ҫулйӗр шырать. Англипе Итали хушшинчи килӗшӳ интервентсем часах ҫӗнтересse шанса тунă. Ҫавăнпа та вăл килӗшӳ ӗҫе кӗресси „Испани ыйтуне татса парассинчен“ килмеле пулнă. Англи правителстви ҫак тӗтрелӗ формулăна ирек мӗнле шухăшпа ăнлантартăр, анчах ҫакна пурте пӗлеҫҫӗ: вăл кирек мӗнле пулсан та фашиссем часах ҫӗнтерӗҫ тесе шанса тăнă, ун хыҫҫăн вара интервентсем хăйсен ҫарӗсене Испанирен илсе кайӗҫ, тесе шутланă.

Анчах интервентсем ҫӗнтереймеҫҫӗ, килӗшӳ ӗҫе кӗреймесӗр тăрать. Муссолини вут-ҫиҫӗм сирпӗтет, мӗншӗн тесен ҫакăнпа пӗрлех тата, „Економист“ ҫырнă тăрăх, „тырпул тухăҫлăхӗ хăрушла начар пулнине кура Италин економикăпа финанс кризисӗ кӗтмен ҫӗртен сасартăк ҫивӗчленсе кайнă“. Англирен кивҫен укҫа илесшӗн тăрăшса, Муссолини Англипе Итали хушшинчи договăра кӗске вăхăтрах ратификацилеме тата Итали ҫарӗсене Испанирен илсе кайасси ҫинчен каласа хăварнине пăрахăҫа кăларма ыйтнă. Чемберлен хаљ ку сӗнӳпе уҫҫăнах килӗшме хăйаймасть-ха, ҫавăнпа та вăл хаљ Италипе Германи интервенчӗсене хăйсен преступленилӗ шухăшӗсене пурнăҫа кӗртме ҫăмăллатакан условисем туса парасшăн пӗтӗм вăйне хурса тăрăшать. Ҫак шутпах ӗнтӗ ҫав провокацине хута йанă. Вăл провокаци ăнăҫсăр пулни, Чемберлен правителстви тӳррӗмех фашисла агрессăрсен сойузникӗ пулса тăнине тăрă шыв ҫине кăларчӗ.

* * *

Йапони вут ҫӗршыва туртса илес шутпа Китайа хирӗҫ вăрҫма пуҫланин иккӗмӗш тапхăрӗ пуҫланнăранпа ийулӗн 7-мӗшӗнче пӗр ҫул таллăк ҫитет. Ку ҫул нумай йенчен пит вӗрентӳлӗ ҫул пулчӗ. Вăл ҫул Китайра Йапонийе хирӗҫле йухăм нихăҫан пулман пек ӳссе кайнине, нацилӗ вăйсем пӗр ҫӗре чăмăртаннине, Йапонийе хирӗҫле нацилӗ фронт ҫирӗпленнине кăтартса пачӗ. Йапони хӗҫ-пăшалне ҫӗнтерме ҫук текен халап татăкланах пӗтсе ларчӗ. Китай ҫарӗсем йапонӗцсене ҫапа-ҫапа хуҫма—питӗ хыттăн ҫапса хуҫма—вӗренчӗҫ.

Вăрҫă техники тӗлӗшӗнчен вăйлă пулни йапонӗцсене Китайра пысăк территорисем туртса илме май пачӗ, анчах вӗсем Китай ҫарне ҫӗмӗрсе тăкаймарӗҫ. Хăй тӗлленех курăнса тăрать,—Китай ҫарӗн сыхланма пултарас хăвачӗ сасартăк ӳссе ҫитӗнмен. Вăл Йапони захватчикӗсене хирӗҫ пыракан кӗрешӳре чăннипе туптанса ҫирӗпленет тата ӳссе ҫитӗнет кăна-ха. Факт ҫакăн пек: ҫулталăк хушши ҫапăҫса йапонӗцсем Китай халăхӗ хирӗҫ тăнине ҫӗмӗрейменӗҫ. Йăлтах урăхла, ҫавăн пек хирӗҫ тăрасси ӳссе пырать, кулленкун лайăхрах организациллӗн пулса пырать.

Йапонин Китайри йăвăрлăхсене пула Йапони правителстви реорганизациленчӗ. Чăннипе илсен хальхи вăхăтра Йапонире власра ҫар кабинечӗ ларать, вăл кабинет кирек мӗнле пулсан та Китайа чи кӗске срукра ҫӗнтерме шут тытнă.

Йулашки кунсенчи ӗҫсем ҫакна кăтартса параҫҫӗ: Йапони ҫарӗсем ҫине тăрсах тата пит хакла ларакан наступленисем тăваҫҫӗ пулсан та, Йапонирен Китайа чылайăх пысăк вăйсем куҫарнă пулсан та, Йапонин генеральнăй штабӗ вăл задачăна пурнăҫа кӗртеймерӗ. Чăнах та йапонӗцсем Ҫуйчжоуна туртса илнӗ тата Аньхуей провинцинче малала кайнă. Анчах Йапони наступленийӗн тӗп тӗллевӗ—Китай ҫарне ҫӗмӗрсе тăкасси—пурнăҫа кӗмен.

Халӗ йапонӗцсем Ханькоу ҫине наступлени пуҫлама хатӗрленеҫҫӗ. Китайри шывсем сарăлса кайни Йапони ҫарӗсен операцийӗсене хытă чăрмантарать. Чăнах та, вӗсен аллинче Йанцзы ятлă йухан шыв, унта вӗсем нумай ҫар карапӗсем илсе пырса тăратнă. Анчах ҫакна шутă илес пулать: Ханькоу ҫурҫӗр йенчен тусемпе хупăрланса тăрать, ҫавăнпа та унта Китай ҫарӗсем вăйлă оборонă организацилеме пултараҫҫӗ. Халех те Йапони ҫарӗсем татăклăн та вăйлăн хирӗҫ тăракан Китай ҫарӗсем ҫине пыра-пыра тăрăнаҫҫӗ.

Уҫҫăнах курăнса тăрать, Китайри вăрҫă вăрăма тăсăлса кайрӗ. А вăхăт Китайшăн ӗҫлет. Англири „Тайм энд Тайд“ журнал ҫапла ҫырать: Йапони кӗтме пултараймасть. Унăн ресурсӗсем виҫелӗ ҫеҫ тата хавшаннă. Американи сутуилӳ министерстви урăх ҫӗршыва таварсем сутакансене: укҫине ҫийӗнчех тӳлеҫҫӗ пулсан кăна йапонӗцсене таварсем сутăр, тесе асăрхаттарни пит паллă йапала мар-и вара?.. Йапони правителстви хăйӗн политикине—шанчăка сухатнисен политикине аса илтерекен политикăна пăрахмасть... Анчах ăнсăртран пулакан инкексем те, фронтра ӗҫсем ăнманни те Китайăн ҫапăҫас кăмăлне-вăйне хуҫаймарӗҫ“.

Йапони захватчикӗсем те Италипе Германи интервенчӗсен средствисемпе усă кураҫҫӗ. Вӗсем хӳтлӗхсӗр мирлӗ халăха массăлăн вӗлереҫҫӗ. Анчах ҫавăн пек тискер ӗҫсем йăлтах вăрҫă пуҫлакан фашиссен ӗмӗчӗсене хирӗҫле результатсем параҫҫӗ. Китай халăхӗн захватчиксене хирӗҫле кураймалăхӗ пӗрмайах ӳссе пырать, унăн Йапони пусмăрҫисене татăклăн ҫӗнтеричченех ҫапăҫас кăмăлӗ тарăнланса, вăйланса, ҫирӗпленсе пырать.

* * *

Пӗтӗм Америка хаҫачӗсем Америкăри Пӗрлешӳлӗ Штатсемпе Германи хушшинчи ҫыхăнусем ҫинчен нача[illegible] паларт[illegible]. Пӗрлешӳлӗ Штатсенче Германин шпионла центăрне тупни ку ӗҫре пысăк вырăн йышăнса тăрать. Ҫав центăра

(Йулашки 4-мӗш страницăра)